им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Октябрь 31 ШĂМАТКУН № 213 (9122)
Хакĕ 20 пус. 36-мĕш çул тухать

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан промышленность работникĕсем! Паха та илемлĕ пир-авăр, паха та капăр тумтир, çирĕп те илемлĕ атă-пушмак тата ытти паха таварсем нумайрах туса кăларăр! Пурне те кирлĕ таварсем туса кăларассине хăвăрт ÿстерер!

(КПСС Центральнăй Комитечĕ Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа чĕнсе каланисенчен).

Паха апат-çимĕç таварĕсем нумай пулмалла тăвассишĕн

Паян СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ÿстерессипе тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен» йышăннă постановлени пичетленсе тухать. Çак документ партипе правительство халăх ырлăхĕшĕн, унăн пурнăç шайне ÿстерсе пырассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнине тата тепĕр хут уççăн кăтартса парать.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ юлашки çулсенче апат-çимĕç таварĕсем туса кăларасси чылай ÿснине палăртаççĕ. 1953 çулта çав таварсене, 1950 çулхипе танлаштарсан, 41 процент ытларах туса кăлараççĕ. Анчах хальхи вăхăтра апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассин ÿсĕмĕ совет халăхĕн материальнăй пурнăçĕпе культурăллă шайне хăвăрт ÿстерсе пымалли задачăна пурнăçлама çителĕксĕр.

Пирĕн йывăр промышленность тунă пысăк çитĕнÿсем, ялхуçалăхĕ аталанса пыни тата ăна малалла вăйлатма кирлĕ ĕçсене пурнăçлани чĕртавар хатĕрлемелли çирĕп никĕс туса хума, апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине хăвăрт ÿстерсе пыма май параççĕ.

«Халĕх пурнăçа кĕртмелли задача çакăн пек,—тесе каланă пичетленсе тухакан Постановленире,—çитес ик-виçĕ çул хушшинче халăха аш-какай продукчĕсем, пулăпа пулă продукчĕсем, çу, сахăр, кондитер таварĕсем, консервсем тата ытти продуктсем парса тăрассине татăклăн ÿстермелле».

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕн постановленийĕнче 1954—1956 çулсенче апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине нумай ÿстерме конкретлă заданисем кăтартса панă. Государство промышленноçĕн 1956 çулта аш-какай 3 миллион тонна яхăн памалла, е, 1950 çулхипе танлаштарсан, аш-какай хатĕрлессине 2,4 хут ÿстермелле, колбасасем 1 миллион тонна туса кăлармалла е колбаса туса кăларассине, 1950 çулхипе танлаштарсан, 2,2 хут ÿстермелле, кайăк-кĕшĕк ашĕ хатĕрлессине 4,7 хут ÿстермелле.

1956 çулта 36 миллион центнера яхăн пулă тытмалла, е пулă тытассине, 1950 çулхипе танлаштарсан, 2,1 хут ÿстермелле. Выльăх-чĕрлĕх çăвĕ туса хатĕрлесси 1956 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут, сыр туса хатĕрлесси 3,3 хут, сахăр-песок туса хатĕрлесси 2,1 хут тата сахăр-рафинад туса хатĕрлесси 2,6 хут ÿсмелле. Çавăн пекех çитес çулсенче ÿсентăран çăвĕ, маргарин, тĕрлĕрен консервсем тата ытти апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ÿстерсе пыма пысăк заданисем кăтартса панă.

Партипе правительство апат-çимĕç таварĕсен пахалăхне ÿстерессине, ассортиментне нумайлатассине пысăк вырăна хураççĕ. Çак таварсен пахалăхĕ юлашки çулсенче чылай лайăхланчĕ тата ассортиментчĕ нумайланчĕ. Анчах чылай предприятисем совет потребителĕ ыйтнă пек паха тата тутлă апат-çимĕç туса кăлараймасçĕ-ха. Çавăн пек çитменлĕхсем, çăмахран, аш-какай, пулă, çăкăр пĕçерекен тата маргарин промышленноçĕнче пур. Республикăсенчи тата вырăнти промышленность предприятийĕсем туса кăларакан апат-çимĕç таварĕсем, ялан пекех, союзлă промышленность продукцийĕнчен каярах.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх, апат-çимĕç таварĕсен пахалăхне лайăхлатса тата ассортиментне нумайлатса пыма, лайăх самăртнă выльăх-чĕрлĕх ашĕ суту-илÿ организацийĕсене нумайрах парса тăмалла, ку вăл аш-какайпа аш-какайран тунă çимĕçсен пахалăхне чылай лайăхлатма май парать. Хаклă йышши пулăсем тытассине, хура тата хĕрлĕ вăлча хатĕрлессине, тăварламан услаçу туса кăларассине, çавăн пекех, сĕт, кефир тата ытти сĕт продукчĕсем туса кăларассине ÿстерме палăртнă. Çăкăрпа булкăсен, кĕрпесен тата ытти апат-çимĕç таварĕсен пахалăхне лайăхлатма тата ассортиментне нумайлатма палăртнă.

Апат-çимĕç промышленноçĕ малтанах висĕ, лайăх тата хитре чĕркенĕ таварсем сахал туса кăларать, ку вăл çав промышленноçăн ĕçĕнчи тĕп çитменлĕхсенчен пĕри пулать. Ун пек таварсене халăх нумай ыйтать. Малтанах виçсе лайăх чĕркесе хурсан, апат-çимĕç лайăх сыхланса тăрать, ăна илекенĕн килте апат пĕçернĕ чухне ытлашши чăрманмалла пулмасть тата çакă суту-илÿ культурине ÿстерет, тавар илекенсемшĕн лайăхрах тăрăшма май парать.

Çавăн пек задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре апат-çимĕç предприятийĕсене йывăр тата çăмăл промышленноçсен тĕрлĕрен отраслĕсенчи работниксен пысăк пулăшу памалла. Апат-çимĕç таварĕсене малтанах виçсе тата хитре чĕркесе хатĕрлеме тĕрлĕрен сортлă хут, пергамент, картон, фольга, целлофан кирлĕ. Анчах вăрман, хут, металлурги тата çăмăл промышленноçсем çав япаласене апат-çимĕç предприятийĕсене çителĕксĕр парса тăраççĕ. Пулă промышленноçĕ валли йывăç каткапичке, парфюмери, эрех тăвакан тата ытти предприятисем валли лайăх кĕленчесем çитмеççĕ.

Машиностроени предприятийĕсенчи работниксен нумай ĕçсем тумалла. Пирĕн апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан промышленноçа кучуххехи лайăх техникăпа пуянлатас ĕç çителĕксĕр сарăлнă. Машиностроени министерствин çак промышленноçа валли машинăсемпе механизмсем çителĕклĕ туса пама пĕрмаях тăрăшмалла.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕн постановленийĕнче апат-çимĕç промышленноçĕн мĕнпур отраслĕсенче çĕнĕ предприятисем тума, кивĕ предприятисене çĕнетме тата техникăпа пуянлатма пысăк программа палăртса хунă. Складсемпе холодильниксем те нумайрах пулаççĕ. Строительство организацийĕсен хăйсен ĕçĕ кая юлнине пĕтермелле.

Партипе правительство апат-çимĕç предприятийĕсем ăнăçлă ĕçлеме кирлĕ условисене пĕтĕмпех туса пачĕç. Пичетленсе тухакан Постановленире апат-çимĕç таварĕсем туса кăларас ĕçе механизацилессине тата автоматизацилессине чылай ÿстерме палăртнă. Кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле пулать. Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан предприятисене чĕртавар, материалсем, топливо, электроэнерги тата оборудовани пĕр татăксăр парса тăмалла.

Хамăр çĕршывра апат-çимĕç таварĕсем питĕ нумай пулмалла тăвасси государствăн калама çук пысăк ĕçĕ пулса тăрать. СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине хăвăрт ÿстерессипе мĕнпур совет, парти тата профсоюз органĕсен питĕ кирлĕ задачисенчен пĕри пулса тăрать, тесе шутлаççĕ тата министрсене, ведомствăсен руководителĕсене, союзлă республикăсенчи Министрсен Совечĕсен председателĕсене тата Коммунистсен партийĕсен Центральнăй Комитечĕсен секретарĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсен председателĕсене, парти крайкомĕсемпе обкомĕсен секретарĕсене апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан промышленность предприятийĕсене çак промышленность умне лартнă задачăсене—халăх валли апат-çимĕç таварĕсем ытларах туса кăларассине тата çĕршывра апат-çимĕç питĕ нумай пулмалла тăвассине пурнăçлас ĕçре пулăшса пыма хушаççĕ.

Партипе правительство тăрăшнине курса апат-çимĕç промышленноçĕнчи работниксем кашни предприятире государство планĕсене хисеп енĕпе те, пахалăх енĕпе те ăнăçлăн пурнăçлама тăрăшаççĕ. Вĕсем продукцин хăйне ларакан хакне малалла йÿнетсе пырассишĕн, чĕртавар ахаль пĕтессине нумай чакарассишĕн, накладной расходсене тата вырăнсăр сукатусене са халлатса пырассишĕн кĕрешеççĕ.

Совет çĕршывĕнчи апат-çимĕç промышленноçĕн работникĕсем, социализмла ăмăртăва активлă хутшăнса, КПСС Центральнăй Комитечĕ Октябрь уявĕ ячĕпе чĕнсе каланине хĕрÿллĕн ырласа йышăнаççĕ:

— Апат-çимĕç туса кăларакан промышленность работникĕсем! Апат-çимĕçсем туса кăларассине пур майсемпе те сарса пырăр, вĕсен пахалăхне лайăхлатăр! Хамăр çĕршыври халăх валли аш-какайпа пулă продукчĕсем, çу, сахăр тата ытти апат-çимĕç таварĕсем нумайрах туса кăларăр!

(«ПРАВДА» хаçатăн 1953 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнчи умстатьи).

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитетĕнче

Куллен кирлĕ промышленность таварĕсем туса кăларассине ÿстересси тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ çакна палăртаççĕ: çĕршыва индустриализацилес тĕлĕшпе Коммунистсен партийĕн политикине ăнăçлăн пурнăçланипе Совет Союзĕн—хальхи вăхăтра хăватлă, техника тĕлĕшĕнчен çĕнетсе лайăхлатнă йывăр индустри пур. Вăл хамăр Тăван çĕршывăн халăх хуçалăхне капитализмла çĕршывсене пăхăнмасăр хăйне ирĕккĕн хăвăрттăн аталанма май парĕ.

Йывăр индустрие малтанхи черетпе аталантармалли задачăна татса пани промышленность производствин пĕтĕмĕшле висинче йывăр промышленноçпа çăмăл промышленность хушшинчи шайлашăва тĕпрен улăштарчĕ.

ССР Союзĕнчи пĕтĕм промышленноçăн продукцийĕ хисепĕнче производство хатĕрĕсен тÿпи 1953 çулта 70 процент патне пулать. Çапла ĕнтĕ йывăр промышленноçăн уйрăмлăх висĕ пĕтĕм промышленность производствинче висĕ пайран икĕ пай ытла йышăнса тăрать. Халĕ ĕнтĕ йывăр промышленноçа аталантарас тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсен никĕсĕ çинче халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине хăвăрттăн вăйлатас ĕçе организацилеме кирлĕ условисем пурте пур. Промышленноçăн потреблени таварĕсем туса кăларакан отраслĕсене аталантарма укçа-тенкĕ хывас ĕçе чылай ÿстерме май пулса тăчĕ.

Çакăнпа пĕрлех куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçе машинăсем тăвакан, металлурги, хими предприятийĕсене тата йывăр промышленноçăн ытти отраслĕсен предприятийĕсене хутшăнтарма май пулса тăчĕ.

Рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, мĕнпур совет çыннисен материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатас тĕлĕшпе тăракан тĕп задачăна шута илсе, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ çапла тума кирлĕ тесе шутлаççĕ: çĕршывра куллен кирлĕ промышленность таварĕсем çителĕклĕ пулмалла тăвас тата халăха çак таварсемпе тивĕçтерессине хăвăрт вăйлатас шутпа çитес 2—3 çул хушшинче çăмăл промышленноçа аталантарас ĕçе пур майсемпе те хăвăртлатмалла.

Асăннă задачăна пурнăçлама халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине çакăн пек хăвăртлăхсемпе вăйлатса пыни кирлĕ: пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх халăха кирлĕ таварсем туса кăларма 1955 çул валли палăртнă задание чылай малтан тултарса çитермелле.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче çĕршыври çăмăл промышленноçра куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе вăрçăчченхи шая çитсе унтан чылай иртсе кайнă. 1953 çулта çакăн чухлĕ тавар туса кăлараççĕ: çĕр мамăк пир-авăрĕ 5 миллиард та 300 миллион метр е 1940 çулта туса кăларнинчен 34 процент ытларах: çăм пир-авăр 200 миллион метр ытла е 1940 çулта туса кăларнинчен 70 процент ытла; пурçăн пир-авăр 400 миллион метр ытла е 1940 çулта туса кăларнинчен 5 хут ытла, кĕпелĕх трикотаж вăрçăчченхи шайпа танлаштарсан, 2,2 хут ытла. 1940 çулхипе танлаштарсан килте тыткалакан япаласемпе культура хатĕрĕсем туса кăларасси те чылай ÿснĕ.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси 1953 çулта пĕтĕмĕшпе илсен вăрçăчченхи 1940 çулхи шайран 72 процент иртет.

Анчах те куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе хальхи вăхăт тĕлне тунă ĕçсен пысăкăшĕ тата çак таварсен пахалăхĕ ĕççыннисен ÿссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултараймасçĕ.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан промышленноçăн хăшпĕр паха отраслĕсем çителĕксĕр аталанса пыраççĕ. 1953 çулта тумтирлĕх трикотаж туса кăларасси вăрçăчченхи шайран 13 процент çеç иртет. Йĕтĕн пир-авăр туса кăларасси 1940 çулхи шайран та пăртак каярах. Çиĕ çемçе йышши пир-авăр, меланжевăй, хĕллехи кĕпесем çĕлемелли пир-авăр, одеялсем, тюль тата гардина изделийĕсем, коттоннăй чăлхасем, ÿкерчĕклĕ носкисем, кĕпелĕх пурçăн трикотаж, тутăрсем, атă-пушмак, çăм пир-авăр, пуçа тăхăнмалли япаласем, çĕленĕ япаласем, савăт-сапа, сĕтел-пукан, культура таварĕсем: радиоприемниксем, телевизорсем, тетрадьсем, велосипедсем, çавăн пекех халăх йăлине лайăхлатакан тата хĕрарăмсен килти ĕçне çăмăллатакан япаласем: çĕвĕ çĕлемелли машинăсем, холодильниксем, пылесоссем, кĕпе çумалли машинăсем туса кăларас ĕçĕн шайĕ начар çителĕксĕр.

Халăх мочеллĕ, рантлă тата сăран тĕплĕ атă-пушмак ыйтнине тивĕçтересси çителĕксĕр пырать. Пысăк пахалăхлă, лайăх илемлетсе тунă савăт-сапа, фарфор сахал туса кăлараççĕ. Сехетсен ассортиментĕ нумай мар.

ССР Союзĕн Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерствин тата ытти промышленноçла министерствăсен нумай предприятийĕсем, союзлă республикăсенчи вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн предприятийĕсем начар пахалăхлă продукци кăлараççĕ тата вĕсен ассортиментĕ нумай мар. Уйрăмах таварсене лайăх туса кăларас, вĕсене тулаш енчен илемлетес ĕç начар тăрать.

Кивелнĕ моделлĕ тата пĕр евĕрлĕ фасонлă таварсем, çавăн пекех пăсăк изделисем туса кăларасси те пĕтмен-ха. Çаплах начар туса хатĕрленĕ, илемсĕр ÿкерчĕклĕ, тĕссĕр, нумая пыман сăрсемпе сăрланă пир-авăр нумай туса кăлараççĕ.

Çĕленĕ япаласене сайра хутра мар юрăхсăр е кивелнĕ модельсем тăрăх туса хатĕрлеççĕ, ирĕк формăллă пальтосемпе костюмсем сахал туса кăлараççĕ, хĕрарăм кĕписене начар эрешлесе илемлетнĕ, хĕрарăмсемпе ачасем валли тĕрлесе, чĕнтĕрлесе тунă изделисем çителĕксĕр хатĕрлеççĕ, тумтирсем çĕленĕ чухне час-часах начар пахалăхлă фурнитурăпа усă кураççĕ.

Нумай йышши сĕтел-пукан, радиоприемниксем, телевизорсем хăйсен пахалăхĕ тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр. Таварсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе уйрăмах вырăнти промышленноçпа промысла коопераци предприятийĕсем кая юлнă.

Суту-илÿ организацийĕсем таварсен пахалăхĕшĕн тата ассортиментĕшĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ, промышленность умне халăх ытларах ыйтакан таварсем туса кăларассине ÿстерме, кайман таварсем туса кăларассине чакарма ыйту сахал тăратаççĕ.

Çакăнпа пĕрлех Хими промышленность министерстви çăмăл промышленноçăн ÿснĕ ыйтăвĕсене тивĕçтерейместь. Пир-авăр промышленноçĕ валли кубовой краскăсем, тĕслĕ сернистăй краскăсем, çăм тата çĕр мамăкĕ валли протравнăй краскăсем, сăран валли нитрокраскăсем, чĕнтĕрлемелли материалсем валли сăрламалли пигментсем, çăмăл промышленность туса кăларакан изделисен пахалăхне лайăхлатма тата вĕсен ассортиментне ÿстерме кирлĕ акриловăй эмульсисем, поливинилхлоридовăй смаласем тата вĕсем валли пластификаторсем тата ытти химилле материалсем çаплах çителĕксĕр туса кăлараççĕ.

Машинăсем тăвакан предприятисем çăмăл промышленность предприятийĕсем валли машинăсем туса кăларассине кирлĕ таран ÿстерсе пымаççĕ. Çакă вăл куллен кирлĕ промышленность таварĕсем туса кăларассине ÿстерме чарса тăрать.

Машиностроени министерстви ку таранах çитсе те пир-сăрăпа атă-пушмак оборудованийĕ, пысăк пахалăхлă чăлхасем туса кăларма паха йышши трикотаж машинисем, специальнăй çĕвĕ машинисем туса кăларас ĕçе организацилемен, çавăн пекех промышленноçăн пир-авăр отраслĕсем валли чĕнтĕрлетмелли оборудовани çителĕксĕр туса кăларать.

Вăраха ямасăр татса памалли задача çакăн пек: 2—3 çул хушшинче халăха кирлĕ промышленность таварĕсем—пир-авăр, тумтир, атă-пушмак, савăт-сапа, сĕтел-пукан, тата культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерме, килте тыткалама кирлĕ япаласем туса кăларассине татăклăн вăйлатмалла.

ССР Союзĕн Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерствин предприятийĕсенче производствăна ÿстерсе пынипе пĕрлех, куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине вырăнти тата кооперацла промышленноçĕнче, çавăн пекех йывăр промышленноçра пысăккăн вăйлатас пулать.

Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн тĕп задачи вăл халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине хăвăрт вăйлатасси тата таварсен пахалăхне лайăхлатасси пулать. Çав вăхăтрах вырăнти промышленноçпа промысла кооперацине пуринчен малтан Уралти, Çĕпĕрти, Инçет Хĕвелтухăçĕнчи, Вăтам Азири тата Казахстанри районсенче аталантарса пырас пулать. Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацин предприятийĕсен ĕçне халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе татăклăн лайăхлатни кирлĕ, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен ательесен, комбинатсен, павильонсен, çавăн пекех сĕтел-пукансем, велосипедсем, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем, патефонсем, радиоприемниксем, атă-пушмак, тумтирсем юсакан мастерскойсен, тумтирсене химилле чеслечĕпе тасатакан предприятисен шутне ÿстерсе пымалла. Уйрăмах юсав ĕçĕсен пахалăхĕпе заказсене пурнăçламалли срокĕсем çине тимлĕ пăхмалла.

Йывăр промышленность министерствисем, уйрăмах Металлурги промышленность министерстви, Машиностроени министерстви, Электростанцисемпе электропромышленность министерстви, Транспорт тата йывăр машиностроени министерстви, Оборона промышленность министерстви, Авиаци промышленность министерстви, Хими промышленность министерстви, СССР Вăрманпа хут промышленность министерстви, СССР Строительство материалĕсем тăвакан промышленность министерстви умĕнче тăракан пысăк задачăсенчен пĕри вăл халăх валли куллен кирлĕ таварсем, вăл шутра культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен, совет çыннисен ĕçне çăмăллатакан тата йăла условийĕсене лайăхлатакан таварсем туса кăларассин[illegible] татăклăн ÿстересси пулать.

Халăха куллен [illegible] таварсем туса кăларассине [illegible] тĕлĕшпе ÿстернипе пĕрлех, вĕсен пахалăхне лайăхлатасси те унтан кая мар пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Куллен кирлĕ таварсен пахалăхĕ хальхи вăхă[illegible] совет потребителĕн ÿснĕ ыйтăвĕсенчен юлса пырать.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан промышленность работникĕсен, çавăн пекех суту-илÿ работникĕсен çакна шута илес пулать: совет халăхĕн пурнăçĕ хăвăрт лайăхланса пынă май пысăк пахалăхлă таварсем те нумайрах та нумайрах кирлĕ пулаççĕ.

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан промышленноçăн мĕнпур работникĕсем умне çакăн пек задача лартаççĕ: паха, лайăх илемлетсе хатĕрленĕ таварсем туса кăлармалла. Паха тата тулаш енчен лайăх илемлетнĕ изделисем туса кăларассишĕн ялан тăрăшасси кашни предприятин, мĕнпур хуçалăх, парти тата профессилĕ организацисен тивĕçĕ пулса тăрать.

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ çапла шутлаççĕ, çăмăл промышленноçа аталантарма укçа-тенкĕ хывассине чылай ÿстермелле, халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли задание ÿстермелле тата куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçе йывăр промышленноçăн машинăсем тăвакан тата ытти предприятийĕсене хутшăнтармалла.

Çитес çывăх çулсенче куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерес, вĕсен пахалăхне лайăхлатас тата ассортиментне нумайлатас тĕллевпе ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ çапла йышăннă:

1. Паллăрах таварсем туса кăларма çакăн пек задани çирĕплетес:

	висе ячĕ	1954 çул	1955 çул
Çĕр мамăк пир-авăрĕ	миллион метр	5.549	6.267
Çăм пир-авăр	»	242	271
Пурçăн пир-авăр	»	504	573
Йĕтĕн пир-авăр	»	295	406
Кĕпелĕх трикотаж	миллион штук	326	882
Тумтирлĕх трикотаж	»	79	88
Чăлха-носки	миллион мăшăр	673	777
Сăран атă-пушмак	»	267	318
Çăматă	пин мăшăр	29 046	33 469
Çĕвĕ изделийĕсем	миллион тенкĕлĕх	44 014	51 805
Çĕвĕ машинисем	пин штук	1 335	2.615
Велосипедсем	»	2.510	3 445
Мотоциклетсем	»	190	225
Сехетсем (пур йышши те)	»	16.800	22.000
вăл шутран алла çыхса çÿремелли сехетсем	»	5.650	7.150
Радиоприемниксемпе телевизорсем	»	3.186	4.527
вăл шутран телевизорсем	»	325	760
Килте тыткалакан холодильниксем	»	207	330
Тимĕр кроватьсем	»	13 500	16 540
Сĕтел-пукан	миллион тенкĕлĕх	5.336	6.958

2. Куллен кирлĕ промышленность таварĕсем туса кăларассине 1956 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, çакăн чухлĕ ÿстерме пăхса хурас:

Çăм пир-авăр	2	хут
Пурçăн пир-авăр	5.2	хут
Çĕр мамăк пир-авăрĕ	70	проц.
Кĕпелĕх трикотаж	2,8	хут
Чăлха-носки	80	проц.
Сăран атă-пушмак	70	проц.
Çĕвĕ машинисем	5,9	хут
Велосипедсем	5,8	хут
Сехетсем	3,2	хут
Радиоприемниксемпе телевизорсем	5	хут
Сĕтел-пукан	3,9	хут

ПИР-АВĂР АССОРТИМЕНТНЕ НУМАЙЛАТАССИ ТАТА УНАН ПАХАЛĂХНЕ ЛАЙĂХЛАТАССИ ÇИНЧЕН

3. Çакна палăртас: хальхи вăхăтра СССР Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерствин предприятийĕсем тата вырăнти промышленноçпа промысла кооперацин предприятийĕсем туса кăларакан çĕр мамăк, çăм, пурçăн, йĕтĕн пир-авăр пахалăхĕпе ассортиментĕ халăхăн ÿснĕ ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерейместĕ.

Пир-авăр промышленность предприятийĕсем арланă, тĕртнĕ тата йĕркелесе илемлетнĕ чухне пулакан кăлтăклă пир-авăр, çавăн пекех тĕксĕм, тĕссĕр тата начар сăрпа сăрланă пир-авăр нумай туса кăлараççĕ.

Пир-авăр промышленность предприятийĕсем штапельнăй çипрен тĕртсе кăларакан пир-авăр çунă хыççăн нумай ларать.

Пир-авăр промышленноçĕ халăх нумайрах ыйтакан пир-авăр çителĕксĕр туса кăларать.

Пурçăн промышленноçĕ штапельнăй çипрен туса кăларакан пир-авăрăн пысăк пайĕ çунă хыççăн нумай ларать, искусственнăй пурçăнран сорочкăсем валли эрешленĕ пир-авăр сахал туса кăлараççĕ, çаптарса тунă пир-авăрсен ÿкерчĕксем сахал, вĕсене çителĕксĕр илемлетсе кăлараççĕ, креповăй пир-авăр та çителĕксĕр туса кăлараççĕ.

Йĕтĕн промышленноçĕ пысăк пахалăхлă йĕтĕн пир-авăр, жаккардовăй пир-авăр, костюмлăх тата кĕпелĕх пир-авăр, ахаль çипрен тĕртсе тунă паха пирсем çителĕксĕр кăларать.

4. Пир-авăр ассортиментне лайăхлатас тĕллевпе СССР Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерствине халăх нумайрах ыйтакан пир-авăр — байкăсем, фланель, пустав, вельветон, замшсем, меланжевăй пир-авăр, çиĕ çемçе йышши пир-авăр (вельвет-корд, вельвет-рубчик, çурма бархат), искусственнăй пурçăнран тĕртсе тунă пир-авăр, одеялсем, тутăрсем, сорочкăлăх пир-авăр, тафтсем, вефирсем, чăпар пир-авăр ытларах туса кăларассине пур майсемпе те ÿстерме хушас.

5. ССР Союзĕн Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерствине çакна тума хушас:

а) 1954—1955 çулсенче çакăн йышши паллăрах пир-авăр туса кăлармалла:

(миллион метр)

	1954 çул	1955 çул
Ситец	810.0	905.0
Сатин	540.0	610.0
Хĕллехи кĕпесем çĕлемелли пир-авăр	180.0	270.0
Кĕпесем валли миткаль пир-авăр	210.0	240.0
Хĕллехи тумтир валли кăларакан пир-авăр	70.0	100.0
Чăпар пир-авăр	160.0	220.0
Çиĕ çемçе йышши пир-авăр	22.5	45.0
Одеял тумалли пир-авăр	16.0	35.0
вăл шутра пикейнăй одеялсем	2,0	8,0
Зефирсем, сăрланă çипрен тунă поплинсем—ÿкерчĕксемпе	25.0	50.0
Тĕвĕлĕ алшăллисемпе простынясем	8,0	15,0

б) çĕр мамăк пир-авăрĕпе пурçăн пир-авăр промышленноçĕн предприятийĕсем штапельнăй çÿререн туса кăларакан пир-авăра çунă хыççăн ларма мар тăвас шутпа, кĕске вăхăт хушшинчех пир-авăра тасатса сăрлакан фабрикăсене штапельнăй çÿререн тунă пир-авăра çусан ларма мар тумалли специальнăй машинăсемпе пуянлатас.

в) костюмсем валли таса çăмран камвольн пир-авăрĕ 1954 çулта—7,3 миллион метр тата 1955 çулта—10,5 миллион метр, костюмсемпе пальтосем валли таса çăмран çÿхе тĕртнĕ пуставсем 1954 çулта — 5,4 миллион метр тата 1955 çулта—6,4 миллион метр тĕртсе кăлармалла, бобриксем 1954 çулта — 6,45 миллион метр тата 1955 çулта—7,5 миллион метр тĕртсе кăлармалла.

6. ССР Союзĕн Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерствине çакна тума хушас:

(Малалли 2-мĕш страницăра).

Политшкулсенче вĕренмелли пособи

Çак кунсенче Чăваш АССР Государство издательстви политшкулсенче вĕренекенсем валли «Политшкулсенче вĕренекенсене пулăшма» ятлă вĕренÿ пособийĕ пичетлесе кăларчĕ. Кĕнекере пурĕ вуникĕ сыпăк: 1. Патша Российăнче рабочисемпе хресченсем мĕнле пурăннă тата вĕсем ирĕке тухассишĕн мĕнле кĕрешнĕ. 2. Октябрьти [illegible] социализмла революци. 3. ССР [illegible] социализмла общество тăвни. 4. Социализмла совет обществи. 5. Социализмла совет государстви. 6. Совет халăхĕсен пĕрлĕхлĕ çемйи. 7. Коммунистсен партийĕ—совет обществин çул кăтартса, ертсе пыракан вăйĕ. 8. СССР тата капитализмла тĕнче. 9. Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи. 10. Совет Союзĕ—мир, демократи тата социализм тĕрекĕ. 11. Совет халăхĕ халăх хуçалăхне малалла аталантарассишĕн. СССР Союзĕнче коммунизм тăвассишĕн кĕрешни. 12. Пирĕн тĕллев—коммунизм.

Политшкулсенче вĕренекенсем, вĕсен руководителĕсем тата ытти юлташсем çак кĕнекене Книготоргăн пур магазинĕсенче те илме пултараççĕ.

СССР Министрсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитетӗнче

Куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларассине ӳстересси тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси ҫинчен

(Малалли. Пуҫламӑшӗ 1-мӗш страницӑра).

б) чи малтан трико («Метро», «Люкс», тата «Ударник» текеннисене), бостон, коверкот, габардин, «Велюр» тата «Столичнӑй» текен драпсем, костюм ҫӗлемелли «Кастор» тата «Креп» текен ҫӳхе пуставсем, хулӑн пустав туса кӑларакан промышленноҫра — ҫӳхерех бобриксем, ҫинӗ ҫемҫе драпсем туса кӑларассине ӳстермелле.

в) ҫӑм пир-авӑрӑ тасатса якатас, илемлетес тата ҫӑрлас ӗҫсен процесӗсене лайӑхлатмалла, кӗпесемпе костюмсем ҫӗлемелли таса ҫӑмран тӗртекен пур пир-авӑра те, ҫавӑн пекех ҫурмалла ҫӑмран тӗртекен пуставсене те йӗпе чухнех ҫӑрлас ӗҫе организацилемелле; таса ҫӑмран тӗртекен камволь пир-авӑра тата пуставсене пурне те гидравлика майпа хӗсӗ тӑнӑҫлассине ӗҫе кӗртмелле; предприятисенче пальто ҫӗлемелли пир-авӑра шыв витмелле мар тумалли установкӑсем лартмалла; таса ҫӑмран тӗртекен пир-авӑра кӗве ҫиесрен сыхлакан хисамсем кӗртес ӗҫе пурнӑҫласа пымалла; костюм тата пальто ҫӗлеме таса ҫӑмран тӗртекен камволь пир-авӑра пӗтӗмпех лайӑх тасатса якатмалла;

г) 1954 ҫулта кӗпе ҫӗлемелли ҫурмаҫӑмран тӗртекен пир-авӑр ушкӑнӗ енӗпе шкул ачисен формисем валли пахалӑхне лайӑхлатнӑ пир-авӑр туса кӑларассине сакӑр миллион метр таран, тӗрлӗ ӳкерчӗксемлӗ пир-авӑр туса кӑларассине пӗр миллион метр таран, ҫирӗп пӗтӗрнӗ ҫипрен тӗртнӗ пир-авӑр туса кӑларассине икӗ миллион метр таран ӳстермелле;

д) 1954 ҫулта костюм ҫӗлемелли ҫурмаҫӑмран тата тӗрлӗ сӑрпа сӑрланӑ ҫипсенчен тӗртнӗ пир-авӑр, пӗтӗмпе туса кӑларнӑ пир-авӑртан 40 процентран кая мар тӗртсе кӑлармалла, ҫав шутран ҫутӑ тӗслӗ пир-авӑр 20 процентран кая мар тӗртсе кӑлармалла;

е) ковер йышши япаласен пахалӑхне лайӑхлатмалла тата 1954 ҫулта вӗсене 5.200 пин тӑваткал метр тата 1955 ҫулта 6 миллион тӑваткал метр тӗртсе кӑлармалла.

7. ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине пурҫӑн пир-авӑра тасатса сӑрлас ӗҫе лайӑхлатма, пир-авӑрӑн, уйрӑмах тумтир айне хумалли пир-авӑрӑн пахалӑхне лайӑхлатма хушас, ӳкерчӗксен ҫӗнӗ пир-авӑр нумайрах туса кӑлармалла. Кӗпесем ҫӗлемелли ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе сӑрлакан чӑпар пир-авӑра тата искусственнӑй пурҫӑнран аялти кӗпе ҫӗлеме тӗртекен пир-авӑра илемлетессине лайӑхлатмалла, ӳкерчӗксене нумай тӗслӗ сӑрсемпе илемлетсе тумалла, штапельнӑй сӳсрен тӗртекен пурҫӑн пир-авӑра тасатса сӑрлас тата илемлетес ӗҫе лайӑхлатмалла; пир-авӑр ҫунӑ хыҫҫӑн ларассине чакармалли тата вӗсене илемлӗрех курӑнакан тумалли ӗҫсене туса ирттерес пулать.

8. ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине 1954—1955 ҫулсенче пӗтӗмпех ҫакӑн йышши пир-авӑр тӗртсе кӑларма хушас:

(миллион метр)

	1954 ҫулта	1955 ҫулта
Нумай ӳкерчӗксемлӗ аялӗ пир-авӑр	6,0	12,0
Ансӑр пир-авӑр	10,5	13,5
Костюмсемпе кӗпесем ҫӗлемелли	5,0	12,0
Аялӗ шурӑ пир	6,0	15,0
Чӗрӗ сӳхе пир	15,0	30,0
Тумтир ҫухи айне хумалли пир	46,0	55,0

ҪЕЛЕНЕ ТАТА ТИРТЕН ТУНА ЯПАЛАСЕН АССОРТИМЕНТНЕ НУМАЙЛАТАССИ, ВЕСЕН ПАХАЛАХНЕ ЛАЙАХЛАТАССИ ҪИНЧЕН

9. Ҫакна палӑртас: ҫӗленӗ япаласен пӗр пайне юрӑхсӑр тата кивелнӗ фасонсем тӑрӑх тӑваҫҫӗ, ирӗк формӑллӑ пальтосемпе костюмсем сахал туса кӑлараҫҫӗ, хӗрарӑмсен кӗпийсене начар эрешлесе илемлетеҫҫӗ, хӗрарӑмсемпе ачасем валли тӗрлесе хитрелетнӗ япаласем ҫителӗксӗр туса кӑлараҫҫӗ. Хӑшпӗр фабрикӑсем технологи дисциплинине пӑсаҫҫӗ, тумтирӗн уйрӑм пайӗсене начар тӑваҫҫӗ, тумтир ҫӗленӗ чухне час-часах начар фурнитурӑпа усӑ кураҫҫӗ.

10. ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине ҫакна тума хушас:

а) 1954—1955 ҫулсенче ҫакӑн пек чи кирлӗ тумтирсемпе кӗпесем ҫӗлесе кӑлармалла:

(пин штук)

	1954 ҫулта	1955 ҫулта
Ҫӑм пир-авӑртан ҫӗленӗ пальто	15.000	20.000
Ҫӑм пир-авӑртан ҫӗленӗ костюмсем	12.400	16.000
Ҫӗр мамӑк пир-авӑртан ҫӗленӗ костюмсем	11.600	15.000
Ҫӑм пир-авӑртан ҫӗленӗ брюкисем	10.000	13.000
Ҫӗр мамӑкпа йӗтӗн пир-авӑртан ҫӗленӗ брюкисем	14.000	18.000
Кӗпесем	10.300	13.000

б) 1954 ҫулта тиртен ҫакӑн чухлӗ тумтир ҫӗлесе кӑлармалла: хӗрарӑм пальти (манто)—300 пин штук, жакетсем—75 пин штук, ача-пӑча пальти — 1.100 пин штук, сухасем—11.000 пин штук, ҫӗлӗксем—13.500 пин штук;

в) пальтосем, костюмсем, кӗпесем, аялтан тӑхӑнмалли арҫын кӗпийсем ҫӗлес ӗҫе чылай лайӑхлатмалла, тӗрлӗ сезона юрӑхлӑ, танар тунмакансен кӑмӑлне кайкан модельсемпе фасонсем шухӑшласа тупас тата вӗсене тума вӗренес ӗҫе чылай лайӑхлатмалла.

г) хӗрарӑмсен хӗллехи пальтине хаклӑ йышши тирсемпе илемлетсе ҫӗлес ӗҫе организацилемелле.

д) 1954 ҫулта Львов, Кишинев, Алма-Ата, Вильнюс тата Куйбышев хулисенче тумтирсем ҫӗлемелли хитре модельсем хатӗрлес енӗпе ӗҫлекен Модельсен ҫурчӗсем организацилес;

е) 1954 ҫулта япаласене ҫунӑ хыҫҫӑн 5 процентран ытла мар ларакан штапельнӑй пир-авӑртан тата вискознӑй пир-авӑртан ҫӗлемелле, ҫунӑ хыҫҫӑн 2—3 процентран ытла мар ларакан ҫӗр мамӑк пир-авӑртан сорочкӑсемпе аялти кӗпесем ҫӗлемелле;

ж) сурӑх тирӗнчен ӑтӑр тата котик тирӗ тӗслӗ, кролик тирӗнчен котик, соболь, шашкӑ тирӗсем евӗрлӗ тата ытти тӗслӗ тунӑ тирсенчен, пакша тирӗнчен, уйрӑмах Ҫӗнӗрте пурӑнакан пакша тирӗнчен, хура, хӑмӑр тата ытти тӗслӗ каракультен, Монголире пурӑнакан сӑвӑр тирӗнчен (натуральнӑй тата сӑрланӑ тирсенчен) япаласем ҫӗлессине чылай ӳстермелле.

11. Ҫемҫе ҫӑмлӑ тискер кайӑксем тытас ӗҫе тата тирсем хатӗрлес ӗҫе ҫителӗксӗр йӗркеленине палӑртса, СССР Ял-хуҫалӑхӗпе хатӗрлев министерствине тата Тулашри суту-илӳ министерствине, ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствипе пӗрле, пӗр уйӑхлӑх срокра СССР Министрӗсен Советне ҫемҫе ҫӑмлӑ тискер кайӑксем тытас ӗҫе тата тирсем хатӗрлес ӗҫе лайӑхлатасси ҫинчен сӗнӳсем тӑратма хушас.

ТРИКОТАЖ ЯПАЛИСЕН АССОРТИМЕНТНЕ НУМАЙЛАТАССИ ТАТА ВЕСЕН ПАХАЛАХНЕ ЛАЙАХЛАТАССИ ҪИНЧЕН

12. Ҫакна палӑртас: трикотаж промышленноҫӗн предприятийӗсем туса кӑларакан, халӑх нумай ыйтакан япаласем—коттон машинисемпе ҫыхнӑ чӑлхасем, чӑпар носкисем, вискознӑй пиртен ҫӗленӗ кӗпе-йӗм—халӗ те ҫителӗклӗ туса кӑлармаҫҫӗ. Сиенлен тӑхӑнмалли кӗпе-тумтир ҫӗленӗсен тӗрлӗ майпа кӑткӑс ҫыхнӑ трикотаж тӑвасси начах ҫителӗксӗр пулса пырать. Трикотаж япалисене час-часах пӗр йышши тӗксӗм тӗслӗ сӑрпа сӑрлаҫҫӗ, вӗсене ансат фасонсем тӑрӑх ҫӗлеҫҫӗ, начар фурнитурӑпа илемлетеҫҫӗ. Халӑх ыйтнине (ача-пӑча, хӗрарӑмсен, арҫынсем валли кирлӗ трикотаж япалисем) тата тӗрлӗ сезон валли юрӑхлӑ пулма кирлине шута илсе (ҫуркуннепе ҫулла, кӗркуннепе хӗлле тӑхӑнмалли трикотаж япалисем) трикотаж япалисене массӑллӑн туса кӑларас ӗҫе аталантарма кирлӗ тесе шутлас.

13. ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине ҫапла тума хушас:

а) 1954 ҫулта искусственнӑй пурҫӑнран ҫыхнӑ кӗпе-йӗм 40 миллион штук, арҫын сорочкисем, теннискӑсем тата шӑлкӑсем ҫыхнӑ кӗпесем—14 миллион штук. Ҫӑмран ҫыхнӑ свитер кӗпе-тумтирсем—2 миллион штук, ҫурмаҫӑмран ҫыхнисем—16 миллион штук, коттон машинисемпе ҫыхнӑ хӗрарӑм чӑлхисем—45 миллион мӑшӑр, ҫав шутран натуральнӑй пурҫӑнран ҫыхнисем —2 миллион мӑшӑр таран, ҫӑмран ҫыхнӑ тата ҫурма ҫӑмран ҫыхнӑ чӑлхасемпе носкисем—12,5 миллион мӑшӑр туса кӑлармалла;

б) 1954 ҫулта хӗрарӑм кӗпийсене пӗтӗмпех вертелӗчнӑй пиртен ҫӗлемелли тата ытти йышши пурҫӑн пиртен ҫӗлекен кӗпесене 50 процентран кая мар аппликацисемпе, чӗнтӗрсемпе, тӗрӗсемпе эрешлесе илемлетмелле. Ҫав япаласенчи тӗрӗсен пахалӑхне тата вӗсене хитрелетекен ӳкерчӗксен пахалӑхне лайӑхлатмалла;

в) трикотажран уйрӑм ҫынсен заказӗсем тӑрӑх кӗпе-тумтир ҫӗлеме ҫак хуласенче ательесем уҫмалла: Мускавра, Ленинградра, Ереванра, Тбилисинче, Сталинградра, Фрунзере, Сталинабадра, Ашхабадра, Ригӑра, Таллинра, Харьковра, Одессӑра, Львовра, Куйбышевра, Калининра тата Горькинче.

Союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсен асӑннӑ хуласенче ательесене вырнаҫтарма ҫуртсем тупса памалла.

г) 1954 ҫулта хӗрарӑмсем валли туса кӑларакан перчаткӑсене тата ачасем валли туса кӑларакан алсишсене 70 процентне илемлетсе хатӗрлемелле.

АТА-ПУШМАК АССОРТИМЕНТНЕ НУМАЙЛАТАССИ ТАТА ПАХАЛАХНЕ ЛАЙАХЛАТАССИ ҪИНЧЕН

14. Ҫакна палӑртас: тир-сӑран тата атӑ-пушмак промышленноҫӗнче ӗҫлекенсем умӗнче тӑракан тӗп задача вӑл тир-сӑран продукцийӗпе атӑ-пушмак продукцине лайӑхлатасси, вӗсен ассортиментне нумайлатасси пулать. Ҫитес икӗ ҫул хушшинче рантовӑй атӑ-пушмак туса кӑларассине икӗ хут ӳстермелле, лакпа сӑрласа тунӑ сӑрантан, замшӑран. шурӑ шеврорен атӑ-пушмак ҫӗлесе кӑларассине 3 хут ытла ӳстермелле, юфтьрен атӑ, шкула ҫӳрекен ачасемпе хӗрачасем валли ӑйран путушаллӑ ҫирӗп атӑ-пушмак, ҫавӑн пекех ҫулла тата килте тӑхӑнмалли атӑ-пушмак туса кӑларассине чылай ӳстермелле. Уйрӑмах хром сӑрансене тӗрлӗ сӑрсемпе сӑрласси ҫине, пысӑк пахалӑхлӑ рантовӑй атӑ-пушмак ҫӗлесе кӑларма лайӑх, нумая чӑтакан, уйрӑмах ача-пӑча атӑ-пушмакӗ валли путуша туса кӑларассине ӳстересси ҫине питӗ тимлӗн пӑхмалла.

Сӑранпа атӑ-пушмак таварӗсем ҫителӗклӗ туса кӑларас тӗлӗшпе производство хӑвачӗсене ҫӗнӗ предприятисем туса тата уйрӑмах ӗҫлекен предприятисене пысӑклатса ҫӗнетсе, тир-сӑран производствинче йывӑр ӗҫсене механизацилесе, атӑ-пушмак ҫӗлес ӗҫе автоматизацилесе тата конвейеризацилесе ӳстермелле.

15. ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине ҫапла тума хушас:

а) 1954 ҫулта юфтьрен 29 миллион мӑшӑр атӑ, хромран—110 миллион мӑшӑр атӑ-пушмак, сӑран путушаллӑ атӑ-пушмак—75 миллион мӑшӑр, рантовӑй атӑ-пушмак—25 миллион мӑшӑр, модельнӑй атӑ-пушмак—12 миллион мӑшӑр, вӑл шутран лакпа сӑрланӑ сӑрантан, замшӑран тата шурӑ шеврорен—3 миллион мӑшӑр ҫӗлесе кӑлармалла.

Лайӑх ассортиментлӑ атӑ-пушмак — шкула ҫӳрекенсем валли, арҫын ачасем валли сӑран путушаллӑ, хӗрарӑмсем валли хутра тата кӑтам кӗлӗллӗ модельнӑй атӑ-пушмак, арҫынсем, хӗрарӑмсем тата ачасем валли ҫулла тӑхӑнма сандалет евӗрлӗ атӑ-пушмак тата юфтьрен атӑ туса кӑларассине чылай ӳстермелле.

б) кийӗ, илемлӗ атӑ-пушмаксен ҫӗнӗ фасонӗсемпе моделӗсене туса хатӗрлесе вӗсене пурнӑҫа кӗртмелле;

в) ача атӑ-пушмак ассортиментне нумайлатмалла, ҫав тӗллевпе хӗрарӑмсем, хӗрсем тата шкула ҫӳрекен ачасемпе пӗчӗк ачасем валли фетрпа сӑрантан ботинкӑсем туса кӑларассине организацилемелле;

г) фетрпа тӗслӗ хаха сӑран тавартан килте тӑхӑнмалли ҫӗнӗ йышши тата ҫӗнӗ конструкциллӗ атӑ-пушмак ассортиментне нумайлатмалла.

16. Хими промышленноҫӗн министерствине 1954 ҫулта 91 миллион мӑшӑр, 1955 ҫулта—95,8 миллион мӑшӑр; СССР Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине—1954 ҫулта—4,2 миллион мӑшӑр, 1955 ҫулта—4,2 миллион мӑшӑр; союзлӑ республикӑсенчи вырӑнти тата топливо промышленность министерствисене 1954 ҫулта—3,2 миллион мӑшӑр, 1955 ҫулта—3,2 миллион мӑшӑр; Центропромсовета—1954 ҫулта — 6,2 миллион мӑшӑр, 1955 ҫулта—6,2 миллион мӑшӑр резина атӑ-пушмак туса кӑларма задани парас.

17. Хими промышленноҫӗн министерствине ҫапла тума хушас:

а) резина атӑ-пушмакӑн, уйрӑмах штамплаcа тӑвакан галошсен пахалӑхне татӑклӑн лайӑхлатмалла, халӑх ытларах ыйтакан, вӑл шутра атӑ, тӗслӗ атӑ-пушмак, хӗрарӑмсемпе хӗрсем валли лакпа сӑрланӑ атӑсем, кнопкӑллӑ тата «ҫиҫӗм» застежкӑллӑ ботинксем туса кӑларассине тата суту-илӳ организацийӗсене тӑратассине ӳстермелле: резина атӑ-пушмакӑн ҫӗнӗ моделӗсемпе фасонӗсем туса хатӗрлес ӗҫ юлса пынине пӗтермелле, 1954 ҫултан пуҫласа сӑран атӑ-пушмак моделӗсемпе тата фасонӗсемпе килӗшекен резина атӑ-пушмак туса кӑлармалла;

б) 1954 ҫулта рынок фондне лакпа сӑрланӑ 5.000 пин мӑшӑр атӑ, 2.600 пин мӑшӑр «ҫиҫӗм» застежкӑллӑ тата кнопкӑллӑ хӗрарӑм ботинкӗсем, 11.500 пин мӑшӑр атӑ тӑратмалла.

ГАЛАНТЕРЕЯ ТАВАРЕСЕМ ТУСА КАЛАРАССИНЕ ӲСТЕРЕССИ ТАТА ВЕСЕН ПАХАЛАХНЕ ЛАЙАХЛАТАССИ ҪИНЧЕН

18. Ҫапла тума кирлӗ тесе шутлас:

Пир-авӑрпа галантерея промышленноҫӗ енӗпе тюльпе гардиннӑй изделисен ассортиментне пуянлатмалла, ҫав изделисене туса кӑларнӑ ҫӗрте искусственнӑй сӳспе тата тӗслӗ ҫиппе усӑ курассине сармалла, кӑткӑсрах тата интереслӗрех ӳкерчӗксем тума оборудованипе тулли усӑ курмалла.

Атласлӑ тата ҫыххилӗх лентӑсен ассортиментне чылай нумайлатмалла, вӗсене сӑрласине лайӑхлатмалла тата вӗсене туса кӑларассине ӳстермелле.

Кӳпе ҫине тытмалли лента туса кӑларассине чылай ӳстермелле.

Сурма ҫӑм тутӑрсемпе кашнесене сӑрлассине лайӑхлатмалла.

Ҫӗнӗ йышши модельсене, фасонсене тата фурнитурӑпа тӑтӑшах пурнӑҫа кӗртсе, сӑран галантерея изделийӗсен ассортиментне нумайлатмалла.

Сӑран галантерея изделийӗсене тӗрлӗ сӑрӗсемпе илемлетнӗ сӑрантан тата заменительсенчен, ҫавӑн пекех никельпе, хромпа, йӗспе, ылтӑнпа илемлетнӗ фурнитурӑран туса кӑлармалла.

Тӗрлӗ йышши сӑран таварсенчен тата искусственнӑй сӑрантан илемлӗ галантерея туса кӑларассине ӳстермелле.

19. ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине ҫапла тума хушас:

а) тюльпе гардиннӑй изделисем 1954 ҫулта 60.5 миллион метр таран, 1955 ҫулта 90 миллион метр таран, урӑхла каласан, 1950 ҫулхинчен ҫичӗ хут нумайрах туса кӑлармалла: рынокра сутма искусственнӑй пурҫӑнтан туса кӑларнӑ 110 миллион метр атласлӑ лента тӑратмалла;

б) 1954 ҫулта искусственнӑй пурҫӑн хушса тюльпе гардиннӑй изделисем туса кӑларассине ӳстермелле.

1954 ҫулта штапельнӑй сӳс хушса тумалли ҫӗнӗ йышши гардинсен тӗслӗхӗсене, икӗ хут ҫиплӗ гардиннӑй тюль, ҫавӑн пекех кӑткӑс ҫивӗтленӗ тюль тата икӗ тӗслӗ гардиннӑй тюлӗн тӗслӗхӗсене хатӗрлесе производствӑра усӑ курмалла.

Сетка евӗрлӗ пиртен штукпа тюль валенийӗсем туса кӑларассине ҫӗнӗрен йӗркелемелле;

в) галстуксен ассортиментне нумайлатмалла тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатмалла.

20. ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине ҫапла тума хушас:

а) ҫӗр мамӑк ҫип 1954 ҫулта 1.900 миллион условнӑй катушка, 1955 ҫулта—1.950 миллион условнӑй катушка туса кӑлармалла, вӑл шутран 1954 ҫулта улттӑ ҫипрен пӗтӗрсе тунӑ тӗреклӗ ҫип 300 миллион условнӑй катушка, 1955 ҫулта 350 миллион условнӑй катушка туса кӑлармалла: ҫӗр мамӑк ҫипсен пахалӑхне тата вӗсене сӑрлассине чылай лайӑхлатмалла;

б) ҫип изделийӗсен производствине ӳстермелле, «Мулина» ҫип 1954 ҫулта 600 миллион ҫӑмха, 1955 ҫулта—750 миллион ҫӑмха туса кӑлармалла;

в) ҫипсемпе ҫип изделийӗсене сӑрламалли гаммӑна чылай сармалла, ҫавӑн пекех ҫипсемпе ҫип изделийӗсене пӑлӑ тӑвас тата тирпейлес ӗҫе лайӑхлатмалла;

г) 1954 ҫулта 126 пин тонна, 1955 ҫулта—130 пин тонна вата туса кӑлармалла, суту-илӳ организацийӗсене ваккӑн вирӗ-вирӗ чӗркенӗ вата 20 процентран кая мар тӑратмалла:

д) 1954 ҫулта 3.5 миллион метр, 1955 ҫулта—4,5 миллион метр ватин туса кӑлармалла, трикотажнӑй ватин туса кӑларассине чылай ӳстермелле.

е) сӗтел ҫине витмелли клеёнка 1954 ҫулта 30 миллион метр, 1955 ҫулта — 45 миллион метр туса кӑлармалла, салфеткӑпа сӗтел ҫитти валли тӑвакан клеёнкӑна илемлетмелле, шурӑ тата ҫутӑ хӑмӑр тӗслӗ, тӗрлӗ ҫеҫкеллӗ тата ӳкерчӗклӗ клеёнка 50 процент таран туса кӑлармалла.

СОРТЛА САВАТ-САПА ТУСА КАЛАРАССИНЕ ӲСТЕРЕССИ ТАТА УНАН ПАХАЛАХНЕ ЛАЙАХЛАТАССИ ҪИНЧЕН

21. Кӗленче промышленноҫӗнче ҫитес икӗ-виҫӗ ҫул хушшинче сортлӑ савӑт-сапа ассортиментне пуянлатмалла. Кӗленче промышленность ӗҫӗнче хрусталь туса кӑларасси тӗп вырӑнта пулмалла. 1956 ҫулта, 1953 ҫулхипе танлаштарсан, хрусталь туса кӑларасси 10 хутран кая мар ӳсмелле.

Кӗленче промышленноҫӗнче ӗҫлекенсен тӗп задачисем ҫаксем пулаҫҫӗ тесе шутлас:

туса кӑларакан изделисен ассортиментне чылай нумайлатмалла тата ҫӗнетмелле, сӑрласа илемлетнӗ изделисем, тӗрлӗ тӗслӗ йӗрсемпе, фотоӳкерчӗксемпе илемлетнӗ, ылтӑнпа сӑрланӑ, малахитовӑй кӗленчерен тата тӗслӗ кӗленчерен тӗрлӗ йышши изделисем туса кӑларассине ӳстермелле;

тӗрлӗ чечексемпе илемлетнӗ, химипе майпа тата электричествӑпа якатса хутӑнӑ лайӑх сортлӑ савӑт-сапа туса кӑларассине анлӑлатса пымалла;

сортлӑ савӑт-сапа тӑвас ӗҫе май килнӗ таранах механизацисемпе туса пымалла. тӗрлӗ тӗслӗ кантӑкран ҫӳхе савӑт-сапа туса кӑларассине чылай ӳстермелле;

кантӑк тӑвакан промышленноҫра изделисем кӑларас ӗҫе конвейерла меслетпе тӑвассине пур майсемпе те анлӑлатса пымалла;

кантӑк ҫӑмӗрлессине, производство ваншӗсене чакармалла, кантӑк тумалли кӑмакасемпе оборудовани усӑ куракан коэффициентне ӳстерсе пымалла.

22. 1954 ҫулта сортлӑ савӑт-сапа 366 миллион тенкӗлӗх (предприятисен куртӑмӑн сутакан 1952 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчи хакӗсемпе шутласан) туса кӑларма, 1955 ҫулта — 418 миллион тенкӗлӗх туса кӑларма задани палӑртса хурас, вӑл шутран ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине 1954 ҫулта—350 миллион тенкӗлӗх, 1955 ҫулта—400 миллион тенкӗлӗх савӑт-сапа туса кӑлармалла.

23. 1954—1955 ҫулсенче сортлӑ савӑт-сапа туса кӑларас ӗҫе ӳстерессипе сывлӑшпа тата пресспа вӗрсе тумалли савӑт-сапа ассортиментне анлӑлатнипе тата унӑн пахалӑхне лайӑхлатнипе пурнӑҫламалла, ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерстви кантӑк тӑвакан промышленность предприятийӗсен сывлӑшпа тата пресспа вӗрсе тунӑ савӑт-сапа 90 миллион штук туса кӑлармалла, вӑл шутра эрех тата шыв ярса лартмалли графинсем—11 миллион, эрех тата шыв ярса лартмалли приборсем 2 миллион, черкисем, фужерсем, бакалсем 3 миллион, уралӑ вазӑсем 3 миллион тата чечек хумалли вазӑсем 2 миллион туса кӑлармалла.

1954 ҫулта хрустальтен 1.5 миллион издели туса кӑлармалла, ылтӑнпа тата тӗрлӗ тӗслӗ йӗрпе илемлетнӗ савӑт-сапа туса кӑларма тепӗр хут тытӑнмалла.

24. ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине ҫапла тума хушас:

а) фотоӳкерчӗксемпе тата ылтӑнпа илемлетсе капӑрлатнӑ изделисем туса кӑларассине организацилемелле;

б) сакӑр тӗслӗ кантӑкран кая мар сыпӑнтарса тунӑ изделисем туса кӑлармалла, вӑл шутра кӗрлӗ ылтӑн тата кӑвӑрлӑ изделисем 5 процентран кая мар туса кӑлармалла; изделисене тӳрӗ йӗрпе тата хире-хирӗҫле пыракан йӗрсемпе илемлетсе анлӑн туса кӑлармалла:

в) суту-илӳ организацийӗсене туалет тума кирлӗ япаласем, пысӑк пахалӑхлӑ вазӑсем, эрех приборӗсем, футляр ӑшне хунӑ парне япалисемпе питӗ паха япаласем, реклама коробкисем памалла.

СЕХЕТСЕМ ТУСА КАЛАРАССИ ҪИНЧЕН

25. Машинӑсем тӑвакан промышленность министерствине ҫапла тума хушас:

а) Суту-илӳ организацийӗсене хӗрарӑмсем алла ҫыхмалли «Заря» йышши сехечӗсем 1954 ҫулта 200 пин штук памалла, вӑл шутра 100 пин штук сехет корпусӗ ылтӑнран тунисем пулмалла, 1955 ҫулта 750 пин штук, вӑл шутра 250 пин штук сехет корпусӗ ылтӑнран тунисем пулмалла.

Ҫав сехетсене футлярпа хурса памалла, вӗсене ҫыхса ҫӳреме сӑрантан е пурҫӑнтан тунӑ ремешоксем пулмалла;

б) хӗрарӑмсен алла ҫыхса ҫӳремелли «Звезда» йышши сехечӗсене хальхи вӑхӑтра улттӑ тӗрлӗ туса кӑлараҫҫӗ пулсан, ҫавӑн йышши сехетсен корпусӗсене ылтӑнран туса тата икӗ тӗрлӗ йышши ҫӗнӗ сехетсем кӑлармалла;

в) аллӑ ҫыхса ҫӳремелли «Победа» йышши сехетсен пӗр пайне 1954 ҫултан пуҫласа тусан кӗмелле мар корпусрен туса кӑлармалла, ҫав сехетсен секунд стрелки центртан тухмалла, циферблачӗсемпе йӗппийсем суталса тӑмалла, ҫавӑн йышши сехетсене мӗнле образецпа тата мӗн чухлӗ кӑларасси ҫинчен СССР Суту-илӳ министерствипе килӗшсе татӑлмалла. Алла ҫыхса ҫӳремелли «Победа» йышши сехетсене ылтӑн корпуса хурса тата виҫӗ тӗрлӗ вариантпа 1954 ҫулта 60 пин штук, 1955 ҫулта—85 пин штук туса кӑлармалла;

г) пӗчӗк те питӗ лайӑх будильниксем йышлӑн туса кӑларассине йӗркелемелле, вӗсен корпусӗсем металран та, ҫавӑн пекех металпа пластмассӑран та хутӑш пулмалла тата ҫав корпуссене тӗрлӗрен илемлетсе кӑлармалла Ҫакӑн пек будильниксене мӗн чухлӗ туса кӑларасси ҫинчен СССР Суту-илӳ министерствипе килӗшсе татӑлмалла;

д) тӗрӗслесе пӑхас шутпа 1954 ҫулта ҫул ҫӳреме кирлӗ будильниксем туса кӑларас, вӗсен футлярӗсене сӑрантан тумалла. 1954 ҫулта стена ҫумне ҫакмалли, ҫапакан сехетсем туса кӑларассине тепӗр хут йӗркелемелле;

е) 1954 ҫулта сӗтел ҫине лартмалли сехетсене лайӑхлатса ҫӗнетмелле, ҫав шутра пӗр е икӗ эрне хушши ҫӳрекен тата ҫапакан сехетсем пулмалла. вӗсен корпусӗсене, циферблачӗсене тата стрелкисене тӗрлӗрен илемлетсе капӑрлатмалла, вӗсене 1954—1955 ҫулсенче СССР Суту-илӳ министерствипе килӗшсе татӑлнӑ чухлӗ туса кӑлармалла;

ж) алла ҫыхса ҫӳремелли ҫӗнӗ йышши сехетсем ҫакӑн чухлӗ туса кӑлармалла:

(Пин штукпа)

	1954 ҫул	1955 ҫул
Тусан кӗмен корпуслӑ сехетсем	200	300
Секунд йӗппине центрта вырнаҫтарнӑ сехетсем:		
1-мӗш образец	150	400
2-мӗш образец	150	400
Суталакан циферблатлӑ тата стрелкӑсемлӗ сехетсем:		
10-мӗш образец	70	85
11-мӗш образец	70	85

ВЕЛОСИПЕДСЕМ, МОТОЦИКЛСЕМ, ПАТЕФОНСЕМ ТАТА ФОТОАППАРАТСЕМ ТУСА КАЛАРАССИ ҪИНЧЕН

26. Машинӑсем тӑвакан промышленность Министерствине ҫапла тума хушас:

а) 1955 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗччен двигателӗ 350—500 кубла сантиметр калӑпӑшлӗ мотоцикл конструкцине туса хатӗрлемелле тата ҫавӑн йышши мотоцикл образецӗсене туса кӑлармалла, ҫавӑн пекех велосипедсем валли икӗ тӗрлӗ моторсен конструкцийӗсене туса хатӗрлемелле;

б) велосипедсене илемлетессине лайӑхлатмалла. 1954 ҫултан пуҫласа велосипедсен 25 процентне кая мар 10 тӗслӗ лакпа сӑрласа кӑлармалла, велосипедсен 50 процентне кая мар тата ачасем валли тӑвакан велосипедсен 75 процентне тукӑнӗсене хромпа витсе кӑлармалла;

в) 1954 ҫулта хӗрарӑмсем, ачасем валли тата ҫул ҫӳремелли ҫӑмӑл велосипедсем туса кӑларассине чылай ӳстермелле;

г) хӗрарӑмсемпе арҫынсем валли алӑпа лайӑхрах тормоз пама пулӑшакан системӑллӑ велосипедсем туса кӑлармалла;

д) ҫӑмӑлтарах детальсемпе шинасем лартса, пур йышши велосипедсен йывӑрӑшне те чылай чакармалла.

27. Машинӑсем тӑвакан промышленность министерствине 1955 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне ҫӗнӗ йышши велосипедсем туса хатӗрлеме хушас, ҫав шутра «Тандем» йышши велосипедсем, пӗчӗк урапа кӑкармалли велосипедсем. ачасем валли (арҫынсемпе хӗрачасем валли) пӗчӗкрех велосипедсем, груз ытларах туртарма май паракан тата ытти йышши велосипедсем туса кӑлармалла

28. Авиаци промышленность министерствине ҫапла тума хушас:

а) велосипед моторӗсем тума вӗренсе ҫитмелле, ҫав моторсене 1954 ҫулта 30 пин штук тата 1955 ҫулта 40 пин штук туса кӑлармалла;

б) кимӗсем валли тӗрлӗ хӑватлӑ моторсем (икӗ вӑйлинчен кая мар) туса кӑларма тытӑнмалла, ҫав моторсене 1954 ҫулта 20 пин штук тата 1955 ҫулта—40 пин штук туса кӑлармалла.

29 Патефонсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 921 пин штука, 1955 ҫулта 1 125 пин штука ҫитермелле.

30 Фотоаппаратсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 765 пин штука тата 1955 ҫулта 1 000 пин штука ҫитермелле

31 Оборона промышленность министерствине 1954 ҫултан пуҫласа «Смена» йышши пӗчӗк те питӗ лайӑх фотокамерӑсем туса кӑларассине йӗркелеме. ҫавӑн пек фотокамерӑсене 1954 ҫулта 150 пин штук тата 1955 ҫулта—200 пин штук туса кӑларма хушас.

КУЛЬТУРАПА ЙАЛАРА ТАТА ХУҪАЛАХРА КИРЛЕ ТАВАРСЕМ ТУСА КАЛАРАССИНЕ ӲСТЕРЕССИ, ВЕСЕН АССОРТИМЕНТНЕ НУМАЙЛАТАССИ ТАТА ПАХАЛАХНЕ ЛАЙАХЛАТАССИ ҪИНЧЕН

32. Йывӑр промышленноҫӑн хуҫалӑхра кирлӗ таварсем туса кӑларакан отраслӗсен, пуринчен малтан, ССР Союзӗн Машинӑсем тӑвакан промышленность министерствин, Электростанцисемпе электропромышленность министерствин, Транспортпа йывӑр машиностроени министерствин, Авиаци промышленность министерствин, Оборона промышленность министерствин, Металлурги промышленность министерствин, Строительство материалӗсем тӑвакан промышленность министерствин, ҫавӑн пекех вырӑнти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн чи пысӑк задачисенчен пӗри вӑл—хуҫалӑхра кирлӗ таварсем туса кӑларассине ӳстерни пӗр вӑхӑтрах продукци пахалӑхне лайӑхлатасси, производствӑна специализацилес тӗлӗшпе ӗҫсем туса ирттерсе продукци хакне йӳнетесси, ҫавӑн пекех халӑх хуҫи хӗрарӑмӗсен ӗҫне ҫӑмӑллатас, халӑха лайӑхрах майсем туса парас тата унӑн йӑлине лайӑхлатас тӗллевпе таварсен ассортиментне нумайлатасси пулать тесе шутлас.

33. Йӑлара кирлӗ пылесосем туса кӑларассине 1954 ҫулта 243 пин штука, 1955 ҫулта—483 пин штука ҫитермелле;

34. Кӗпе ҫумалли машинӑсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 111 пин штука, 1955 ҫулта 296,3 пин штука ҫитермелле;

35. Авиаци промышленность министерствине тата Электростанцисемпе электропромышленность министерствине кӗпе ҫумалли (1.5 килограмм кӗпе ҫумалли) ансат та йӳнӗ машинӑсем туса кӑларассине йӗркелеме хушас.

36. Электричество утюгӗсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 3.550 пин штука, 1955 ҫулта 4.375 пин штука ҫитермелле;

(Юлашки 3-мӗш страницӑра).

СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитетӗнче

Куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларассине ӳстересси тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси ҫинчен

(Юлашки. Пуҫламӑшӗ 1-мӗшпе 2-мӗш страницӑсенче).

1950 ҫулхипе танлаштарсан, тӑхӑр хут ӳстермелле.

37. Чугунтан савӑт-сапа туса кӑларассине 1954 ҫулта 47,7 пин тоннӑна, 1955 ҫулта 67,5 пин тоннӑна ҫитермелле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, пилӗк хута яхӑн ӳстермелле.

38. Эмалированнӑй чугунтан савӑт-сапа туса кӑларассине 1954 ҫулта 12.345 тоннӑна, 1955 ҫулта 27.070 тоннӑна ҫитермелле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, ҫичӗ хут ытларах ӳстермелле.

39. Эмалированнӑй тимӗртен савӑт-сапа туса кӑларассине 1954 ҫулта 61,2 пин тоннӑна, 1955 ҫулта 114,2 пин тоннӑна ҫитермелле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 5 хут ҫурӑ ытларах ӳстермелле.

Министерствӑсене-поставщиксене эмалированнӑй савӑт-сапа пахалӑхне лайӑхлатма тата ҫавӑн йышши савӑт-сапана суту-илӳ организацийӗсене 70 процентран кая мар пӗррремӗш сортлӑ туса пама хушас.

Тӗксӗм тӗслӗ пӗр тӗрлӗ эмальпе витнӗ тимӗр савӑт-сапасем туса кӑларассине чылай чакарас, илемлӗ тӗслӗ эмальпе витнӗ савӑт-сапасем ытларах кӑларса тӑмалла тӑвас.

40. Цинкпа витнӗ тимӗртен савӑт-сапасем туса кӑларассине, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 1955 ҫулта тӑватӑ хут ӳстермелле,—1954 ҫулта 143.9 пин тонна таран, 1955 ҫулта 193,7 пин тонна таран туса кӑлармалла.

41. Алюминирен савӑт-сапасем туса кӑларассине 1954 ҫулта 90 пин тоннӑна, 1955 ҫулта 107 пин тоннӑна ҫитермелле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, виҫӗ хут ӳстермелле.

Министерствӑсемпе ведомствӑсене алюминирен тунӑ савӑт-сапасен пахалӑхне лайӑхлатма хушас. Ҫав шутпа савӑт-сапасене лайӑхрах якатмалла, аврисене пластмассӑран е алюмини сплавӗнчен е хурҫӑ хистисенчен туса вӗрипе пӗтчен лакпа витӗнтермелле.

42. Сӑмаварсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 675 пин штука, 1955 ҫулта 890 пин штука ҫитермелле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, тӑватӑ хут ӳстермелле.

43. Тутӑхман хурҫӑран кашӑксем туса кӑларассине 1954 ҫулта 11.7 миллион штука, 1955 ҫулта 17,2 миллион штука ҫитермелле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, пилӗк хут ӳстермелле.

44. Керосинкӑсемпе керогазсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 2.966 пин штука, 1955 ҫулта 3.843 пин штука ҫитермелле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, виҫӗ хута яхӑн ӳстермелле.

45. Металтан кроватьсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 13.5 миллион штука, 1955 ҫулта 16,5 миллион штука ҫитермелле.

Кроватьсен пахалӑхне тӗпренех лайӑхлатас тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнмалла, никеллесе е хромировани туса ҫутатассине, сӑрласине тата ҫирӗплетсе лартмалли пайӗсене лайӑхлатмалла.

46. Министерствӑсемпе ведомствӑсем сӗтел-пукансем тӑвас ӗҫе аталантарасси тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси ҫине кирлӗ пек пӑхманнине палӑртас. Сӗтел-пукансемпе шкап-дивансем тӑвакан производство хӑвачӗсене, уйрӑмах Вӑрман тата хут промышленность министерствин предприятийӗсен хӑвачӗсене начар ӳстерсе пынӑ.

Сӗтел-пукансемпе шкап-диванӗсен ассортименчӗ пысӑк мар. Чи лайӑх тата пӗррремӗш класс шутланакан сӗтел-пукансене, авса тунӑ сӗтел-пукансене, кӗнеке шкапӗсене, ача-пӑча сӗтел-пуканӗсене, ҫавӑн пекех тата икӗ е виҫӗ пӳлӗмлӗ хваттерсем валли ятарласа тунӑ сӗтел-пукансене питӗ сахал туса кӑлараҫҫӗ. Суту-илӳ организацийӗсене пынӑ сӗтел-пукансен, уйрӑмах выранти промышленность тата промысла кооперацийӗн предприятийӗсенчи илнӗ сӗтел-пукансен пахалӑхӗ начар, вӗсем тавар илекенсене тивӗҫтерейменсӗ.

СССР Вӑрманпа хут промышленность министерствине Союзлӑ республикӑсенчи Министрсен Совечӗсене ҫапла тума хушас:

а) сӗтел-пуканпа шкап-диван тӑвакан предприятисенче продукци ассортиментне нумайлатмалла, тата авса тунӑ пукансем, буфетсем, кӗпе-тумтир валли шкапсем, кӗнеке хумалли шкапсем, дивансем, ача-пӑча сӗтел-пуканӗсем, икӗ е виҫӗ пӳлӗмлӗ хваттерсене лартмалли сӗтел-пукансем туса кӑларассине чылай ӳстермелле. Халӑха ытларах кирлӗ сӗтел-пукансемпе шкап-дивансене туса кӑларассине ҫӗршывӑн кашни районӗнчех палӑртмалла;

б) чи лайӑх тата пӗррремӗш класс шутланакан сӗтел-пукансемпе шкап-дивансем туса кӑларассине ӳстермелле;

в) сӗтел-пукансемпе шкап-дивансен пахалӑхне нумай лайӑхлатмалла, ҫав шутпа фанерланӑ тата щитсемпе конструкциленӗ сӗтел-пукансем ытларах туса кӑлармалла, сӗтел-пукансемпе шкап-дивансен формисене тата вӗсене хитрелетессине лайӑхлатмалла, сӗтел-пукансене хаклӑ йышши йывӑҫпа витӗнтерсе тата хаклӑ йышши лак-сӑрӑ сӗрсе, сӗтел-пукан тытмалли пир-авӑр, тӗкӗр тата фурнитура витӗнтерсе лайӑхлатмалла.

47. СССР Вӑрман тата хут промышленность министерствине суту-илӳ организацийӗсемпе килӗшсе татӑлса чемодансене ассортимента кӗртме хушас; чемодансене хитре те тӗрлӗ фасонлӑ тата тӗрлӗ калӑпӑшлӑ тумалла, нитролакпа витмелле, картонтан тӑвас пулсан ятарласа тунӑ ҫирӗп, ҫӑмӑл картонран туса лайӑх сӑрламалла.

48. ССР Союзӗн Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине, Центропромсовета тата Союзлӑ республикӑсенчи Министрсен Совечӗсене халӑха куллен кирлӗ таварсене туса кӑларакан промышленность предприятийӗсенче продукцин хӑйне ларакан хакне малалла йӳнетес, чӗртаварпа хатӗр продукци тӑкакне сахаллатас, накладной расходсемпе обращени расхочӗсене сахаллатас, ҫав вӑхӑтрах таварсен пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнма хушас.

49. Государство тата кооперации аллинчи промышленность предприятийӗсенче халӑха куллен кирлӗ ҫӗнӗ таварсене халиччен туса кӑларнӑ пулсан, вӗсене СССР Суту-илӳ министерстви килӗшмесӗр ҫав таварсене тума пӑрахма чарас.

50. Министерствӑсемпе ведомствӑсене тата союзлӑ республикӑсенчи Министрсен Совечӗсене халӑха куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине министерствӑсем планлакан проектсемпе плансене пӑхса тухма хушас; ҫавна тунӑ чухне ҫав таварсене туса кӑларассине чылай ӳстерме кирлине, суту-илӳ организацийӗсемпе килӗшсе вӗсем ыйтнӑ таран кӑларма кирлине шута илмелле.

ВЫРӐНТИ ПРОМЫШЛЕННОҪПА ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИЙӖН ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕНЧЕ КУЛЛЕН КИРЛӖ ТАВАРСЕМ ТУСА КӐЛАРАССИНЕ ӲСТЕРЕССИ ҪИНЧЕН

51. Ҫакна палӑртас: союзлӑ республикӑсенчи выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсенче куллен кирлӗ таварсене туса кӑларассин шайӗ ӗҫҫыннисен ҫак таварсем тӗлӗшӗнчи ӳссе пыракан ыйтӑвӗсемпе пӗр шайра тӑмасть.

Выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн системинче сӗтел-пукан, радиоприемниксем, патефонсем, велосипедсем, металран тунӑ кроватьсем, металран тата фарфорпа фаянсран тунӑ савӑт-сапа, йӑлара усӑ куракан холодильниксем, ача-пӑча урапиcем, кӗпе ҫумалли машинӑсем, тимӗр-тӑмӑр таварӗсем тата ытти куллен кирлӗ таварсем туса кӑларасси уйрӑмах ҫителӗксӗр пулса пырать.

Выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсенче куллен кирлӗ таварсем туса кӑларас енӗпе хальхи производство хӑвачӗпе начар усӑ кураҫҫӗ, выранти чӗртавар бази питех те начар аталаннӑ.

Республикӑсен Министрӗсен Совечӗсем, облисполкомсем, крайисполкомсем, хула совет исполкомӗсем тата райисполкомсем выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн ӗҫне начар ертсе пыраҫҫӗ, вӗсем выранти промышленноҫпа промысла кооперацине аталантарас ӗҫре пуҫарулӑх сахал кӑтартаҫҫӗ, куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине ӳстерес ӗҫре предприятисене кирлӗ пулӑшу памаҫҫӗ, выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗ туса кӑларакан продукци халӑхӑн ыйтӑвӗсене тивӗҫтермелли пысӑк ҫӑлкуҫ пулса тӑнине шута илмеҫҫӗ.

Выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн нумай предприятийӗсем пурӑнмалли ҫуртсенче тата пошал сӗрӗ ҫуртсенче вырнаҫнӑ. Вӗсем производство валли юрӑхлӑ мар. Чылай предприятисен цехӗсем тӗрлӗ ҫӗрте сапаланса [illegible].

Предприятисен пысӑк пайне начар механизациленӗ, унта пӗчӗк тухӑҫ паракан, кивелнӗ оборудованипе ӗҫлеҫҫӗ, предприятисенче квалификациллӗ кадрсем ҫитмеҫҫӗ, ҫавна пула ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пӗчӗккӗ, продукцин хӑйне ларакан хакӗ пысӑк пулать.

Выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсенчен пӗри вӑл—нумай изделисем тӗлӗшпе государство панӑ плана тултарманни тата туса кӑларнӑ продукци япах пулни. Ҫавна пула суту-илӳ организацийӗсем предприятисене вӗсем туса кӑларакан таварсене час-часах каялла тавӑрса параҫҫӗ.

52. Республикӑсен Министрӗсен Совечӗсен, облисполкомсен, крайисполкомсен, хула совет исполкомӗсемпе райисполкомсен, выранти тата топливо промышленность министерствисен тата Союзлӑ республикӑсен Выранти промышленность министерствисен, Центропромсоветӑн тата союзлӑ республикӑсенчи промысла кооперацийӗсен Совечӗсен чи кирлӗ задачи — куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине татӑклӑнах ӳстересси тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси пулать, тесе шутлас.

53. Выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсенче куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине нумай ӳстерес шутпа союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсемпе Центропромсовета ҫапла тума хушас:

а) выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсен валли палӑртнӑ балансене тултармалла тӑвас тӗлӗшпе туса иртермелли ӗҫсене пӗр уйӑх хушшинче туса хатӗрлесе ҫирӗплетмелле;

б) чи лайӑх тӗслӗхсемпе модельсем тӑрӑх ҫӗнӗ йышши изделисем туса кӑларма вӗренсе тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене пӗр уйӑх хушшинче туса хатӗрлесе ҫирӗплетмелле;

в) выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсенче ҫӗнӗ техникӑна, малта пыракан технологие анлӑн ӗҫе кӗртсе пымалла, поток меслечӗсемпе ӗҫлессине организацилемелле, ҫак ӗҫре конвейерсемпе усӑ курмалла, ҫавӑн пекех государствӑпа кооперации промышленноҫӗнчи малта пыракан предприятисен тата производство новаторӗсен ӗҫӗн опычӗпе анлӑн усӑ курмалла;

г) 1953—1955 ҫулсенче выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсене специализацилемелле. Ку вӑл производство хӑвачӗсемпе усӑ курассине тӗпрен лайӑхлатмалла, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетмелле тата туса кӑларнӑ таварсен пахалӑхне лайӑхлатмалла;

д) таварсене инҫетрен тата хире-хирӗҫле турттарса тӑрассине чакарас, халӑхӑн ыйтӑвӗсене вырӑнта туса кӑларакан таварсен шучӗпе ытларах тивӗҫтерес шутпа, куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине районсем тӑрӑх тӗрӗс уйӑрса парассине пурнӑҫламалла;

е) халӑх ыйтман таварсене выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсенче туса кӑларассине пӗтермелле, продукци хӑйӗн пахалӑхӗпе Союза тата Союзпа республикӑна пӑхӑнса тӑракан предприятисем туса кӑларакан продукцирен кая ан пултӑр тесе, продукци ассортиментне сармалла тата унӑн пахалӑхне лайӑхлатмалла;

ж) выранти тата кооперации промышленноҫӗн хӑйӗн чӗртавар базине аслӑлатмалла, хӑма, фанерӑсем, сип, тир тата тир вырӑнне усӑ курмалли материалсем, сӗтел-пукан тата металл фурнитури, пӗветмелли япаласем тата ытти йышши чӗртаварпа материалсем туса кӑларассине ӳстермелле;

з) халӑхӑн йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес тӗлӗшпе выранти промышленноҫпа промысла кооперации предприятийӗсен ӗҫне лайӑхлатмалла, ательесен шутне, атӑ-пушмак, тумтир юсакан тата кӗпе-тумтире химилле тасатакан мастерскойсемпе павильонсен шутне, ҫавӑн пекех сӗтел-пукан, велосипедсем, ҫӗвӗ ҫӗлемелли машинӑсем, патефонсем, радиоприемниксем, телевизорсем юсакан мастерскойсен шутне ӳстермелле. Ку предприятисене тӗрӗс вырнаҫтарса тухасси ҫине, юсав ӗҫӗсен пахалӑхӗ тата йышӑннӑ заказсене вӑхӑтра пурнӑҫлани ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхмалла.

54. Облаҫсем ҫине пайланса тӑман союзлӑ Республикӑсен Министрӗсен Совечӗсене, автономиллӗ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсене, облисполкомсене, крайисполкомсене, хула совет исполкомӗсемпе райисполкомсене ҫак ӗҫсене тума ирӗк парас:

а) районти тата хулари промышленноҫӑн, ҫавнашкалах облаҫа, края тата АССР-сенче республикӑна пӑхӑнса тӑракан промышленноҫӑн, Выранти тата топливо промышленность министерствисен, Выранти промышленность министерствисен накопленийӗсене, директор фончӗсӗр пуҫне, 60 процент таран района, облаҫа, хулана пӑхӑнса тӑракан промышленноҫа ӳстерме капитальнӑй ӗҫсем валли ҫирӗплетнӗ плансенчен ирттерсе уйӑрса памалла;

б) района, хулана, облаҫа, края тата АССР-сенче республикӑна пӑхӑнса тӑракан выранти промышленность предприятийӗсен капитальнӑй ӗҫсем тума каякан накопленийӗсемпе 25 процент таран пурӑнмалли ҫуртсем тума, культурӑпа йӑла строительстви валли тата благоустройство валли усӑ курмалла;

в) районти (хулари) промышленность накопленийӗсенчен района, хулана, облаҫа пӑхӑнса тӑракан выранти промышленность предприятийӗсене аслӑлатма тата ҫӗнӗрен тума каякан накопление районсем тӑрӑх валеҫсе тухмалла.

55. Союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсене ҫакӑн пек тума право парас:

а) облаҫа, края, АССР-сенче республикӑна пӑхӑнса тӑракан выранти промышленность предприятийӗсен, ҫавнашкалах районти тата хулари промышленность предприятийӗсен, республикӑна пӑхӑнса тӑракан хуласен, область, край тата АССР центрӗсен капитальнӑй ӗҫсем тума каякан накопленийӗсене 60 процент таран ҫавӑн пек накоплениесем ҫук облаҫсене, крайсене, АССР-сене валеҫсе памалла, вӗсенче ҫак накопление районти промышленность предприятийӗсене аслӑлатма тата ҫӗнӗрен тума, ҫавнашкалах облаҫа, края, АССР-сенче республикӑна пӑхӑнса тӑракан выранти промышленность предприятийӗсене аслӑлатма тата ҫӗнӗрен тума капитальнӑй ӗҫсем валли ҫирӗплетнӗ плансенчен ирттерсе уйӑрса памалла;

б) облаҫри, крайри выранти промышленноҫӑн тата промысла кооперацийӗн организацийӗсемпе предприятийӗсем сумӗнче чӗртавар пахалӑхне тӗрӗслес, производствӑна лайӑхрах организацилес, ҫӗнӗ технологие ӗҫе кӗртес, туса кӑларакан япаласен ассортиментне ӳстерес тӗлӗшпе ӗҫлеме выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн работникӗсен хисепӗнче ӗҫ укҫи фончӗ тӗлӗшпе ҫирӗплетсе панӑ лимитсенчен иртмесӗр, конструкторла-техникла бюросем тумалла.

56. Промбанка ҫапла тума хушас: района, хулана, облаҫа, края, АССР-сенче республикӑна пӑхӑнса тӑракан предприятисене куллен кирлӗ таварсемпе апат-ҫимӗҫ таварӗсем, строительство материалӗсем, топливо туса кӑларас ӗҫе организацилесе ӳстерсе пыма тата халӑхӑн йӑлари ыйтӑвӗсене тивӗҫтерекен предприятисене аслӑлатма тата ҫӗнӗрен организацилеме облисполкомсемпе крайисполкомсем тата автономиллӗ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсем ыйтнӑ тӑрӑх пӗр предприяти пуҫне 1 ҫултан пуҫласа 3 ҫуллӑх срока 500 пин тенкӗ таран, союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсем ыйтнӑ тӑрӑх—1 ҫултан пуҫласа 6 ҫуллӑх срока 2 миллион тенкӗ таран кивҫен укҫа памалла, кивҫен илнӗ укҫана илнӗ хыҫҫӑн иккӗмӗш ҫулӗнчен тытӑнса тӳлеме пуҫламалла.

57. Цекобанка ҫапла тума хушас: райисполкомсемпе хула исполкомӗсем ыйтнӑ тӑрӑх, халӑхӑн йӑлари ыйтӑвӗсене тивӗҫтерекен предприятисемпе сооруженисене (электростанцисене, водопроводсене, парикмахерскисене, мунчасене, душсене) аслӑлатма тата ҫӗнӗрен тума, ҫавӑн пекех вырӑнта строительство материалӗсем туса тӑракан предприятисене аслӑлатма тата ҫӗнӗрен тума пӗр предприяти пуҫне пилӗк ҫуллӑха 500 пин тенкӗ таран кивҫен памалла.

58. Госбанка ҫапла тума хушас: района, хулана, облаҫа, края, АССР-сенче республикӑна пӑхӑнса тӑракан выранти промышленность предприятийӗсене, промысла кооперацийӗн артелӗсене тата суту-илӳ организацийӗсене (потребительсен кооперацисен хатӗрлев организацийӗсене кӗртсе) куллен кирлӗ таварсемпе апат-ҫимӗҫ таварӗсем, строительство материалӗсем, топливо туса кӑларас ӗҫе организацилесе ӳстерсе пыма тата халӑхӑн йӑлари ыйтӑвӗсене тивӗҫтерекен предприятисене, столовӑйсене, пахча ҫимӗҫсемпе улма-ҫырла хатӗрлемелли, вӗсенчен тӗрлӗ ҫимӗҫсем туса кӑлармалли техникӑлла базӑсене аслӑлатма тата ҫӗнӗрен организацилеме, ҫавнашкалах куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине тата вӗсен пахалӑхне ӳстерме, халӑхӑн йӑлари ыйтӑвӗсене лайӑхрах тивӗҫтерме кирлӗ ытти мероприятисене пурнӑҫлама 12 уйӑхран ытла мар срокпа кивҫен укҫа памалла, ҫавӑн пекех асӑннӑ предприятисемпе организацисене производствӑри запассем, туса ҫитереймен продукци тата хатӗр продукци тӑрӑх, хӑйсен оборотри укҫи-тенкине шута илмесӗр, 12 уйӑхран ытла мар срокпа кивҫен укҫа памалла.

Кӑтартнӑ ӗҫсене тума кивҫен укҫа ҫак йӗркепе памалла:

района, хулана, облаҫа, края, АССР-сенче республикӑна пӑхӑнса тӑракан предприятисене предприятисем ыйтнӑ тӑрӑх 100 пин тенкӗ таран, облисполкомсем, крайисполкомсем, республикӑсен Министрӗсен Совечӗсем ыйтнӑ тӑрӑх пӗр предприяти пуҫне 500 пин тенкӗ таран, пӗр ҫулччен тӳлесе татмалла парас пулать;

промысла кооперацийӗн артелӗсене тата суту-илӳ организацийӗсене артельсемпе суту-илӳ организацийӗсем ыйтнӑ тӑрӑх 100 пин тенкӗ таран тата промысла кооперацийӗн облаҫри, крайри, республикӑри Совечӗсем, потребительсен кооперации союзӗсем тата ҫӳлте тӑракан суту-илӳ организацийӗсем ыйтнӑ тӑрӑх пӗр предприяти (организаци) пуҫне 500 пин тенкӗ таран пӗр ҫулччен тӳлесе татмалла парас пулать.

59. Районти, хулари промышленноҫӑн, ҫавнашкалах облаҫа, края, АССР-сенче республикӑна пӑхӑнса тӑракан выранти промышленноҫӑн накопленийӗсем шучӗпе, районти, хулари промышленноҫӑн капитальнӑй ӗҫсем тума каймалли амортизаци укҫи шучӗпе тата ҫак постановлени тӑрӑх панӑ кивҫен укҫа шучӗпе, капитальнӑй ӗҫсем тумалли планран ирттерсе, предприятисене аслӑлатма тата ҫӗнӗрен тума райисполкомсемпе хула исполкомӗсен решенийӗсем тӑрӑх пӗр предприяти пуҫне 200 пин тенкӗ таран, облисполкомсем, крайисполкомсем, тата автономиллӗ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсем йышӑннӑ решенисем тӑрӑх — 500 пин тенкӗ таран, союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсем йышӑннӑ решенисем тӑрӑх—2 миллион тенкӗ таран расходлама ирӗк парас.

60. Выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗнче производствӑн усӑ курман хӑвачӗсен резервӗ пысӑк пулнине палӑртас, ҫавӑнпа та союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсене выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсенче куллен кирлӗ таварсем палӑртнӑ хисепрен ытларах туса кӑларас тӗлӗшпе мероприятисем хатӗрлесе ҫирӗплетме хушас, ҫавнашкалах 1954—1955 ҫулсенче выранти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсенче, выранти чӗртаварпа тата государство промышленноҫӗнчен юлакан каяш материалсемпе анлӑн усӑ курса, куллен кирлӗ таварсем ытларах туса кӑларса рынока сутас тӗлӗшпе мероприятисем хатӗрлесе ҫирӗплетме хушас.

КАПИТАЛЬНАЙ СТРОИТЕЛЬСТВО ҪИНЧЕН

61. Куллен кирлӗ таварсем туса кӑларакан промышленность производствине аслӑлатас тата ҫӗнӗ предприятисем тӑвас ӗҫре сывӑх вӑхӑтрах пысӑк ушӑнусем тӑвас. Пысӑк предприятисене тӑвас ӗҫе хӑвӑртлатас тата 1954—1956 ҫулсенче вӗсене ӗҫе ярас: пир-авӑр промышленноҫӗ тӑрӑх—Камышин, Энгельс, Херсон, Барнаул, Сталинабад, Гори, Шупашкар, Ярцев, Омск, Калинин, Серпухов, Фурманов, Кинешма, Вышний Волочек, Полтава хулисенче; ҫӑм пир-авӑр промышленноҫӗ тӑрӑх—Минск, Брянск, Краснодар, Иваново, Свердловск, Канск, Чернигов тата Павловски Посад хулисенче; пурҫӑн промышленноҫӗ тӑрӑх—Красноярск, Бендера, Киев (Дарница), Наро-Фоминск, Калинин, Ленинабад хулисенче; йӗтӗн промышленноҫӗ тӑрӑх—Смоленск, Орша, Псков, Паневежис хулисенче; трикотаж промышленноҫӗ тӑрӑх—Шупашкар тата Черниговск хулисенче; тир-сӑран тата атӑ-пушмак промышленноҫӗ тӑрӑх—Ульяновск, Улан-Удэ, Великие Луки, Джамбул, Ворошиловград, Таллин, Новосибирск, Сталино, Сталинград, Орел, Воронеж, Камышлов тата Баку хулисенче.

Пир-авӑр, трикотаж, тир-сӑранпа атӑ-пушмак промышленноҫӗн халӗ ӗҫлекен предприятийӗсене реконструкцилесе аслӑлатас, вӗсене пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлекен оборудовани парас.

62. СССР Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине 1954—1955 ҫулсенче ҫакӑнта кӑтартнӑ производство хӑвачӗсене ӗҫе кӗртме хушас:

	1954 ҫул	1955 ҫул
Арламалли йӗкесем—пурӗ (пин штук)	480	1.381
Вӑл шутра:		
пир-авӑр промышленноҫӗ тӑрӑх	422	1.190
ҫӑм пир-авӑр промышленноҫӗ тӑрӑх	43	181
пир-авӑр тӗртмелли станоксем — пурӗ (штук)	15.507	38.000
Вӑл шутра:		
пир-авӑр промышленноҫӗ тӑрӑх	13.000	32.130
ҫӑм пир-авӑр промышленноҫӗ тӑрӑх	995	3.204
пурҫӑн промышленноҫӗ тӑрӑх	1.175	2.080
Атӑ-пушмак туса кӑларас хӑват (миллион мӑшӑр)	20	35
Чӑлха-носки туса кӑларас хӑват (миллион мӑшӑр)	22	36
Хытӑ сӑран туса кӑларас хӑват (тонна)	6.410	8.065
Хром сӑран (миллион кв. дм.)	85	300
Юфть сӑран (миллион кв. дм.)	105	145

63. Ҫакӑнта палӑртнӑ производство хӑвачӗсене ӗҫе кӗртме, ҫавнашкалах куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларакан ҫӗнӗ предприятисем тумашкӑн ҫитес ҫулсем валли кирлӗ запас хатӗрлеме 1954 ҫулта СССР Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине капитальнӑй ӗҫсем тума 5.850 миллион тенкӗ уйӑрса парас, 1953 ҫулта капитальнӑй ӗҫсем 3 миллиард та 148 миллион тенкӗлӗх тӑваса кӗтмелле.

64. Строительство министерствине 1954 ҫулта СССР Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствин стройкисенче строительствӑпа монтаж ӗҫӗсене 922.7 миллион тенкӗлӗх тума хушас.

65. СССР Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствине тата Строительство министерствине 1953 ҫул валли капитальнӑй ӗҫсем тума, производство хӑвачӗсене ӗҫе кӗртме палӑртнӑ плана, ҫавнашкалах пурӑнмалли ҫуртсем, ача сачӗсемпе яслисем, шкулсем, сыватакан учрежденисем тата культурӑпа йӑлара кирлӗ ытти объектсем тума палӑртнӑ плана 1953 ҫулта пӗтӗмӗшпех тултарма хушас.

66. СССР Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерствипе Строительство министерствине ҫапла тума хушас: асӑннӑ министерствӑсен куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑлармалли предприятисем тӑвакан строительство организацийӗсене ҫирӗплетес тӗлӗшпе тата ҫав строительство организацийӗсене халӑх хуҫалӑхӗнчи ертсе пыракан отраслӗсен строительство организацийӗсемпе пӗр пек условисем туса парас тӗлӗшпе пӗр уйӑх хушшинче мероприятисем хатӗрлесе, ҫав мероприятисене СССР Госпланӗпе тата СССР Финанс министерствипе килӗштерсе, СССР Министрӗсен Советне тӑратмалла.

67. Союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсене, облисполкомсемпе крайисполкомсене ҫӗнӗрен тӑвакан куллен кирлӗ промышленность таварӗсен предприятийӗсене выранти строительство материалӗсем кирлӗ таранах тата чи малтан парса тӑма хушас.

68. Союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсене пӗр уйӑх хушшинче выранти промышленноҫпа кооперации промышленноҫӗнче ҫак постановленипе кӑтартса панӑ чухлӗ куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑлармалӑх производство хӑвачӗсене ӳстермелли заданисене туса хатӗрлеме хушас.

69. Ҫак постановленипе куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларас тӗлӗшпе кӑтартса панӑ заданисене тултарма 1954 ҫулта союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсене Выранти тата топливо промышленноҫӗн министерствисемпе тата Выранти промышленность министерствисем валли капитальнӑй ӗҫсем тума 810 миллион тенкӗ уйӑрса парас; вӑл шутран: РСФСР Министрӗсен Советне—314 миллион тенкӗ, Украина ССР Министрӗсен Советне—170 миллион тенкӗ, Белоруссии ССР Министрӗсен Советне—120 миллион тенкӗ, Узбек ССР Министрӗсен Советне—20 миллион тенкӗ, Казах ССР Министрӗсен Советне—20 миллион тенкӗ, Грузин ССР Министрӗсен Советне—10 миллион тенкӗ, Азербайджан ССР Министрӗсен Советне—10 миллион тенкӗ, Литва ССР Министрӗсен Советне—26 миллион тенкӗ, Латви ССР Министрӗсен Советне—30 миллион тенкӗ, Киргиз ССР Министрӗсен Советне—10 миллион тенкӗ, Молдаван ССР Министрӗсен Советне—10 миллион тенкӗ, Таджик ССР Министрӗсен Советне—9 миллион тенкӗ, Армян ССР Министрӗсен Советне—10 миллион тенкӗ, Туркмен ССР Министрӗсен Советне—10 миллион тенкӗ, Эстони ССР Министрӗсен Советне—30 миллион тенкӗ, Карело-Финн ССР Министрӗсен Советне—12 миллион тенкӗ.

70. Куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларакан предприятисене чӗртавар, материалсем, топливо, электроэнерги, оборудовани пӗтӗмӗшпех ҫителӗклӗ тата йӗркеллӗ парса тӑрассине чи кирлӗ задача тесе шутлас.

* * *

СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ халӑха куллен кирлӗ таварсем туса кӑларас ӗҫе хӑвӑртлатасси министерствӑсен, ведомствӑсен тата союзлӑ республикӑсенчи Министрсен Совечӗсен питех те кирлӗ задачи пулса тӑрать тесе шутлаҫҫӗ, ҫавӑнпа та министрсене, ведомствӑсен руководителӗсене, союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсен председателӗсене 1954 ҫулхи хуҫалӑх планӗсен проекчӗсенче ҫак Постановление пӗтӗмӗшпех пурнӑҫа кӗртме май паракан конкретлӑ мероприятисем палӑртма хушаҫҫӗ.

Обществӑлла уполномоченнӑй

Хаҫат-журнал подписки йышӑнакан пӳлӗме яштака пӳллӗ самрӑк кӗрсе тӑчӗ. Ӑна курнӑ ӗҫлекен П. Николаев юлташ сывлӑх сунса кӗтсе илчӗ, хаҫат-журнал каталогӗпе паллаштарчӗ. «Хаҫат-журнал вӑл—пирӗн сывӑх тус. Пӗр кун хушши хаҫат вуламасан та пурнӑҫран юлатӑн. Ҫирӗппе ӑмӑртса ӗҫленӗ комбайнер Николай Макаров виҫӗ экземпляр ҫырӑнчӗ. Эсир те кая юлмастӑр пулӗ»,—терӗ вӑл самрӑка.

П. Спиридонов килӗшрӗ. Хаҫат пурнӑҫра пысӑк вырӑн йышӑнни ҫинчен вӑл хӑй те пӗр тӗслӗх илсе кӑтартрӗ. Тырпул пухса кӗртме тухас умӗн ӑна хӑватлӑ машина «С-4» комбайн шанса панӑ. Унӑн опыт пачах пулман. Вӑл тыра вырма тухас умӗн «Коммунизм ялавӗ» хаҫатра Улатӑр МТС-ӗнчи И. Цапаев комбайнер «С-4» комбайнпа тырпул пухса кӗртни ҫинчен ҫырнине вуласа тухнӑ, малта пыракан комбайнер сӗннӗ пек ӗҫлеме тӑрӑшнӑ. Кӑҫал 400 гектар ҫинчен тӗштырӑ тата нумай ҫул ӳсекен курӑк вӑрлӑхӗ пухса кӗртнӗ.

Спиридонов комсомолец килес ҫул «Коммунизм ялавӗ» хаҫата илсе тӑма кӑмӑл турӗ—ҫулталӑклӑха ҫырӑнчӗ. Ҫавӑн пекех «Машинно-тракторная станция» журнала районти хаҫата ҫырӑнчӗ. Унтан Е. Барбузанова комбайнерка килчӗ. Вӑл та виҫӗ экземпляр хаҫат-журнал ҫырӑнчӗ.

Советскинчи машина-трактор станцийӗнче хаҫат-журнал сармалли пункт уҫнӑ. Унта обществӑлла уполномоченнӑй пулса ВЛКСМ комитечӗн секретарӗ П. Николаев юлташ ӗҫлет. Вӑл ҫак ӗҫре виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ. Хаҫат-журнал сармалли плана кашни ҫултах ирттерсе тултарнӑ.

Николаев юлташ 1954 ҫулшӑн хаҫат-журнал ҫырӑнтарма октябрӗн 15-мӗшӗнче тытӑнчӗ. Вӑл подписка йышӑнмалли пунктра ҫеҫ мар, механизаторсем, служащисем ӗҫленӗ вырӑнта та калаҫусем ирттерет.

МТС-ра ӗҫлекенсем хушшинче октябрӗн 15-мӗшӗнчен пуҫласа 7.836 тенкӗлӗх хаҫат-журнал сарнӑ.

Механизаторсемпе служащисем «Коммунизм ялавӗ», «Советская Чувашия», «Сельское хозяйство» хаҫатсемпе «Машинно-тракторная станция», «Колхозное производство», «Техсоветы МТС», «Земледелие» журналсене нумай ҫырӑнса илнӗ. МТС-ра ӗҫлекенсен ҫитес ҫулта 40 тӗслӗ хаҫатпа журнал илсе тӑмалла.

Ҫитес ҫулта илсе тӑма кунта ӗҫлекенсем 3—4-шар экземпляртан кая мар хаҫат-журнал ҫырӑнаҫҫӗ. Р. Никольская, Н. Корсаков, В. Васильев, В. Иванова, В. Иванов юлташсем 6—11-шер экземпляр ҫырӑннӑ.

МТС-ра ӗҫлекенсем хушшинче 1954 ҫулшӑн хаҫат-журнал ҫырӑнасси малалла пырать. Обществӑлла уполномоченнӑй П. Николаев юлташ ку тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлет.

Я. СИГАЕВ.

Ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕ

ВЕНА, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕнче «Ĕçлесчесĕсене вĕсен пурнăç интересĕсемшĕн пыракан кĕрешĕвĕнче пулăшу парассине вăйлатасси çинчен» Видимари туни доклад тăрăх пайн прениесем пусланнă.

Председатель пулса ертсе пыракан Кубота (Япони) Албанири ялхуçалăхĕнчи рабочисен представительне Кокони Книмона сăмах парать. Халăх влаçĕн çулĕсенче, кăтартса панă оратор, Албанире алакан çĕр лаптăкĕ 49 процент ÿснĕ. Пимĕкçулăх вĕçĕнче ялхуçалăх продукцийĕ туса илесси 1939 çулхипе танлаштарсан, 2,5 хут ÿсмелле.

Кокони Квимо çапла палăă тăвать: ирĕке тухнă Албанири ĕççыннисем ялхуçалăхне лайăхлатассишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ. Хресченсен пурнăçпа культура условийĕсем вĕçĕмсĕр лайăхланса пыраççĕ.

Конференцире Латинла Америка представителĕ Рамос пысăк сăмах тухса каланă.

Вăл Гватемалари хресченсен пурнăçĕпе вĕсен Америка колонизаторĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕ çинче тĕплĕ чарăнса тăнă.

Рабочи класс ертсе пынипе хресченсем çине тăрса кĕрешнипе пула, палăă тăвать оратор, 1952 çулхи июнĕн 17-мĕшĕнче çĕр реформи çинчен декрет пичетлесе кăларнă. Çав декрета туса хатĕрлес ĕçе рабочи класĕн представителĕсем активлă хутшăннă.

Илсейчи ĕççыннисен кĕрешĕвĕ çĕр реформине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртессишĕн, шултра çĕр хăрпăрлăхне пĕтерессишĕн пырать. 23 помещик çемйи тата Америкăри «Юнайтед Фрут компани» монополийĕ пĕтĕм çĕре хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Американ хаçатсем çĕршывăн шахти ĕçĕсене хутшăнаççĕ, вĕсем шултра феодалсен пĕчĕк ушкăнĕ майлă пулаççĕ. Вĕсем, уйрăммăн илсен, çĕр реформине пурнăçа кĕртессине чарса тăма хăтланаççĕ. «Юнайтед Фрут компани» монополийĕ çĕршыври мĕнпур реакцилĕ организацисене укса-тенкĕ парса тăрать. Çав организацисем демократиллĕ правительствăна вырăнтан кăларма хăтланаççĕ.

Рамос малалла çапла кăтартса панă: Гватемалăра пысăк çĕр хуçисенчен 150 пин гектар çĕре туртса илнĕ ĕнтĕ, вăл шутра «Юнайтед Фрут компани» монополийĕн çĕрне 83 пин гектар туртса илнĕ. Ку çĕрсене 25 пин хресчене валеçсе панă.

Рамос юлашкинчен конференци делегачĕсене рабочи класпа хресченсен кĕрешÿри союзне тĕреклетме чĕнсе каланă.

Иккĕмĕш тĕнче вăрçи, тет Новицкий (Польша), Польшăна питĕ пысăк сиен кÿчĕ. 350 пин ытла хресчен хуçалăхне ишăлтернĕ, выльăх-чĕрлăхе 60 процент ытла пĕтернĕ. Апла пулин те халăх влаçĕн çулĕсенче çĕршыв хуçалăхĕ питĕ пысăк ÿсĕмсем тунă. Çĕр реформи йышăннипе пула ултă миллион гектар чухăн çĕре хресченсене тÿлевсĕрех валеçсе панă, хресченсен помещиксене тÿлемелле пулнă парăмсене пĕтернĕ. Хулара та ялта та халĕ ĕçсĕрлĕх çук. Хресченсем хушшинче хут пĕлменлĕхе пĕтернĕ.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн секретарĕ Луиджи Грасси конференцие Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ ячĕпе саламланă.

Грасси ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисен представителĕсене миршĕн, вăрçă бюджечĕсене чакарассишĕн, халăха хирĕç пыракан законсене хирĕç, çĕр реформине пурнăçа кĕртессишĕн пыракан кĕрешÿре рабочи класпа хресченсен пĕрлехи ĕçне çирĕплетме чĕнсе каланă.

Сильвестро Аконо (Камерун) кĕске сăмах каланă хыççăн, конференци кун йĕркинчи виççĕмĕш ыйтăва сÿтсе явма тытăннă. «Ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисен кĕрешĕвне анăçлă туса пырас ĕçре организаци формисемпе меслечĕсен пĕлтерĕшĕ» тема тăрăх доклад тума ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисен профсоюзĕн Пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн вице-председательне Карруане (Франци) сăмах панă.

Совет Союзĕнчи производство новаторĕсем Чехословакире

ПРАГА, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакире хальхи вăхăтра Совет Союзĕнчи производство новаторĕсен делегацийĕ хăналанать. Республикăри рабочисем Совет Союзĕ янă çынсене хăшпĕн тата юратса кĕтсе илеççĕ.

Социализмла Ĕç Геройĕсем—Кузбасри горняк Я. Г. Чекмарев тата Донбасри горняк П. К. Заварза Чехословакири нумай шахтăсенче пулнă, унта вĕсем хăйсен опычĕ çинчен каласа панă.

Кладно бассейнĕнчи Антонин Запотоцкий ячĕпе тăракан шахтăри чи лайăх ĕçлекен горняксем Совет Союзĕнчи горняксемпе тĕл пулнă. Проходчиксен бригадирĕ паллă горняк Йозеф Котятко Совет Союзĕнчен килнĕ хăнасене хăйĕн ĕçĕ çинчен, унăн бонгади, Совет Союзĕнчи рабочисен ĕç меслечĕсемпе усă курса, ĕçре пысăк ÿсĕмсем тума пултарни çинчен каласа панă.

Сталинла премин лауреачĕ В. Ф. Шумилин токарь Чехословакири юлташĕсене метала хăвăрт майпа касас ĕçре пухнă опыт çинчен каласа панă. Челаковицкри «Тос» заводĕнчи токарьсене вăл темисе резец парнелесе хăварнă.

Делегаци членĕ—М. А. Смирнова инженер Чехословакири нумай стройкăсенче пулнă. Вăл инженерсене, техниксемпе рабочисене Совет Союзĕнче строительствăра усă куракан çĕнĕ меслетсем çинчен каласа панă.

Делегация ытти членĕсем те Чехословакири рабочисене хăйсен опычĕпе тата пĕлĕвĕсемпе паллаштараççĕ.

Ĕççыннисен йăлари ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе лайăхлатмалла

Шупашкар хула Совечĕн ситтĕмĕш сессийĕ ĕççыннисен йăлари ыйтăвĕсене тивĕçтерес, тĕлĕшпе ĕçлекен предприятисен ĕçĕсем çинчен сÿтсе явнă.

Ку ыйтупа сессире хула Совет исполкомĕн председатель заместителĕ А. В. Киселев депутат доклад туса панă. Хула Совечĕн вырăнти промышленность енĕпе ĕçлекен планкн комиссийĕн председателĕ И. А. Захарцев депутат содоклад турĕ. Пренире 9 çын тухса каларĕ.

Доклад тăваканесемпе пренире тухса калакансем çапла палăртрĕç: халăха кирлĕ кирлĕ таварсем туса кăларасси, ĕççыннисен йăлари ыйтăвĕсене тулли тивĕçтерессн вырăнти промышленноспа промысла кооперации предприятийĕсем мĕнле ĕçленинчен килет. Хуларн çавăн пек предприятисем юлашки çулсенче нумайрах та нумайрах продукци туса кăлараççĕ. Кĕпе-тумтир çĕлекен мастерскойсен, атă-пушмак çĕлекен тата юсакан мастерскойсен шучĕ ÿссе пырать. Савăт-сапа, сĕтел-пукан, çĕвĕ машинисем, сехетсем, велосипедсем юсакан, тумтире химилле майпа тасатакан мастерскойсем пур. Хулара халĕ 58 мастерской ĕçлет. Кунсăр пусне, 8 фотографи, 15 парикмахерски, 4 мунча, прачечнăй ĕçлеççĕ.

Вырăнти промышленноспа промысла кооперацийĕн предприятийĕсем продукци туса кăлармалли тăхăр уйăхри плана пĕтĕмпе 108,4 процент тултарнă, 1952 çулта çак вăхăт хушшинче тунă продукцирен 5,3 миллион тенкĕлĕх ытла продукци туса кăларнă. Предприятисенче Октябрьти Социализмла Аслă революци уявĕ умĕнхи социализмла ăмăрту анлă сарăлнă.

Çав вăхăтрах хулари промысла артелĕсен, мастерскойсен, коммунальнăй предприятисен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. «Красный мебельщик», «30 лет комсомола», «Парат» артельсем тăхăр уйăхри производство планне тултарайман. Хăшпĕр предприятисем плансене ассортимент енĕпе пĕтĕмпех тултарса çитерейменççĕ. Хулари промкомбинатпа «Кожупряжь» артелĕн атă-пушмак çĕлекен тата юсакан темиçе мастерской пур, вĕсенчен пĕри те плана тултарса пымасть, çитменнине тата япаласене начар юсаççĕ. Тумтире сăрлакан тата химилле майпа тасатакан мастерскойсем питех те япăх ĕçлеççĕ. Çăматă йăвалакан мастерской ÿсее çитĕннĕ çынсем валли çăматăсем туса кăлармалли заданине пурнăçласа çитерейменст. Промкомбинатпа промысла артелĕсем туса кăларакан япаласем начар, çавăнпа та вĕсене илмеççĕ, складсемпе магазинсенче кайман тавар чылай выртать.

Коммунальнăй предприятисенче те пысăк çитменлĕхсем пур. Хулара мунчасем, парикмахерскисем сахал, механизациленĕ прачечнăй çук. Хальхи вăхăтра çав предприятисем халăх ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтерейменççĕ.

Хулари магазинсемпе столовăйсен ĕçĕнче çитменлĕхсем нумай-ха. Халăх ыйтакан хăшпĕр таварсем час-часах пулмаççĕ. Нумай магазинсенче сивĕ, таса мар, тавар илме пыракан çынсемпе кĕçĕллĕн калаçмаççĕ.

Хулара коммунальнăй предприятисен, магазинсемпе столовăйсен, мастерскойсен шутне нумайлатма тата вĕсен ĕçĕсене лайăхлатма хуçалăхла организацисем те, хула Совечĕн исполкомĕ те сахал тăрăшаççĕ. Пурăнмалли коммунальнăй çуртсене юсас ĕç япăх пулса пырать. Автотранспорт ĕçне кирлĕ пек йĕркелесе çитермен.

Хула Совечĕн исполкомĕ предприятисемпе мастерскойсен руководителĕсен канашлăвне ирттернĕ, унта чылай каласнă, паха сĕнÿсем панă. Анчах исполком çав сĕнÿсене пурнăçлас ĕçе организацилемен. Çавна пула предприятисенче уйччен мĕнле йĕрке пулнă, вĕсем çапла юлнă, предприятисенче ĕç лайăхланман.

Сессире В. Савенко депутат хула Совечĕн исполкомне халиччен йышăннă решенисене çителĕксĕр пурнăçласа пынишĕн хытă критиклерĕ. Вăл çапла каларĕ:

— Сессисенче апир ĕççыннисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе, коммунальнăй предприятисемпе мастерскойсен ĕçне, суту-илĕве лайăхлатасси çинчен нумай калаçатпăр, паха решенисем йышăнатпăр Анчах исполком решенисем мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслесе тăмасть, решенисене пурнăçлама хуçалăх организацисен руководителĕсене çине тăрса хушмасть.

Çавăнпа пĕрлех вăл Чапаевски поселокри магазинра суту-илÿ ĕçне начар йĕркелени, атă-пушмак юсакан мастерской валли пĕр çуртăн коридорĕнче çеç вырăн тупса пани, жалобăсемпе сĕнÿсен кĕнекисем çине çырнисем тăрăх ĕçе лайăхлатма мерăсем йышăнманни çинчен каларĕ.

Вырăнти промышленность предприятийĕсемпе мастерскойсем япăх тавар туса кăларнине, сурт-йĕрсене начар юсанине, суту-илÿри çитменлĕхсене Н. Виноиурова, В. Лебедева, А. Степанова депутатсем тата ытти юлташсем те палăртрĕç. Хулари промкомбинатăн 23 йышши япала туса кăлармалла пулсан, вăл 13 йышши япала çеç туса кăларать. Мастерскойсенче витресем, крассын тултармалли бидонсем тумаççĕ. Пысăк предприятисенче мастерскойсене, магазинсене вырнаçтарма юрăхлă тата пысăк пÿлĕмсем уйăрса памаççĕ. Магазинсенче халăх мĕнле таварсем ыйтнине тĕпчесе вĕренес ĕçе организацилемен. Чапаевски поселокра пахча çимĕç писта та сутмаççĕ.

Пренире тата Н. Байков, А. Алексеев, В. Гурьянов, Н. Волков депутатсем, М. Воротилов юлташ тухса каларĕç.

Депутатсем хула Совечĕн исполкомне вырăнти промышленноспа кооперации промышленносĕн, коммунальнăй хуçалăхăн предприятийĕсем плана пур енĕпе те тултарса пымалла тăвассишĕн тăрăшма сĕнÿсем пачĕç: продукци пахалăхне лайăхлатма, суту-илÿре çирĕп йĕркелĕх тума кирлине палăртрĕç.

Сÿтсе явнă ыйту тăрăх сесси тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Политикăлла конференци пухас ыйтупа ирттерекен канашлу

ПЕКИН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ политикăлла конференци пухас ыйтупа пулнă канашлу çинчен Корейăпа Китай делегацийĕ пĕлтернине панă. Пĕлтернинче çапла каланă:

Октябрĕн 28-мĕшĕнче политикăлла конференци тĕлĕшпе пухăннă канашлура виççĕмĕш лару пулса иртнĕ.

Ларура чи малтан Демократиллĕ Корея Халăх Республикин представителĕ Ки Сук Бок тухса каланă. Пĕтĕм тĕнчипе паллă фактсем çинче чарăнса тăрса, Ки Сук Бок Америка представителĕ Артур Дин ĕнер тухса калани çумне нумай фактсем хушса каланă. Вăл Артур Дин Корейăпа Китай правительствисем Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительствине ответлесе çырнине тата перемири çинчен йышăннă килĕшĕвĕн 60-мĕш параграфне юриех пăснине хытă критиклерĕ. Ки Сук Бок Корейăпа Китай енĕн татăклă шухăш-кăмăлĕ çинчен тепĕр хут çирĕплетсе каланă. Корейăпа Китай шучĕпе политикăлла конференци ĕçне нейтральнăй государствăсем те хутшăнмалла. Ки Сук Бок Америка представительне нейтральнăй государствăсене усçăнах кăмăллачаншăн тата нейтральнăй государствăсене политикăлла конференцие хутшăнтарма сăмсăрăн тата ăссăррăн килĕшменшĕн айăпласа каланă.

Вăл çавăн пекех çапла кăтартса панă: Америка представителĕ политикăлла конференци тĕллевĕсем çинчен каланă чухне хăйĕн ĕнерхи сăмахĕнче ют çĕршыв çарĕсене Корейăран илсе тухасси çинчен тăракан ыйтуран пăрăннă. Америка представителĕ тенĕ Ки Сук Бок, лару ирттермен вăхăтра уççăнах çапла каланă: политикăлла конференцин тĕллевĕ Китай халăх добровольцĕсене Корейăран илсе тухасси пулать, Америка çарĕсем вара Корейăра юлмалла. Çакă вăл Америка çыннисем политикăлла конференци ĕçĕ çине чăннипе мĕнле пăхнине тăрă шыв çине кăларать. Ки Сук Бок юлашкинчен каллех çакăн пек требовани лартнă: Америкăн Корейăпа Китай сĕннĕ кун йĕркине йышăнмалла, политикăлла конференци составĕ çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явма тытăнмалла.

Америка представителĕ ларура Совет Союзĕ çинчен элеклĕ сăмахсем каланă. Вăл Совет Союзĕ нейтральнăй государство пулса тăмасть, тенĕ. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн законсăр резолюцийĕ витĕнсе, Америка представителĕ Корейăпа Китай представителĕсене кÿрентернĕ. ООН-ăн законсăр резолюцийĕнче элеклесе Корейăпа Китая «агрессор» тенĕ. Америка представителĕ перемири çинчен тунă килĕшĕвĕн 60-мĕш параграфĕнче каланине каллех пăснă, нейтральнăй государствăсене политикăлла конференцие хутшăнтарма килĕшмесĕр турткаланса тăнă.

Китай Халăх Республикин представителĕ Хуан Хуа çапла кăтартса панă: Пĕрлешÿллĕ Штатсем, Пĕрлешнĕ Нацисен ячĕпе витĕнсе, Корейăна хирĕç агрессилĕ вăрçă пуçланă. Совет Союзĕ вара яланах Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса пама тăрăшнă, халĕ те тăрăшать, Америка çыннисем Совет Союзĕ Корейăри вăрçăра нейтралитет тытман тесе ĕнентерме пултараймĕç Хуан Хуа çапла пĕлтернĕ: Корейăпа Китай политикăлла конференци ĕçне нейтральнăй государствăсене: Совет Союзне, Индие тата Азири ытти çĕршывсене хутшăнтарассишĕн татăклăн тăраççĕ. Çакăн пек ĕнтĕ Корейăпа Китайăн çирĕп те татăклă шухăш-кăмăлĕ. Çакăн пек ĕнтĕ Азири тата пĕтĕм тĕнчери мире юратакан халăхсен пĕр кăмăллă требованийĕ, тенĕ вăл Хуан Хуа Корейăпа Китай сĕннĕ кун йĕркине нимĕн тăхтаса тăмасăр çирĕплетме сĕннĕ. Ку вăл чи малтанах политикăлла конференци составĕ çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явма тата татса пама кирлĕ

Америка представителĕсем сĕннипе ларăва тепĕр вăхăта хăварнă.

Ким Ир Сен Китайри мире хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен халăх комитечĕн делегацийĕн представителĕсене йышăнни

ПХЕНЬЯН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Демократиллĕ Корея Халăх Республикин министрсен кабинечĕн председателĕ Ким Ир Сен Китайри мире хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен халăх комитечĕн Хв Луч генерал ертсе пыракан делегацийĕн представителĕсене йышăннă. Йышăнура Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Верховнăй Халăх Пухăвĕн Президиумĕн председателĕ Ким Ду Бон. Демократиллĕ Корея Халăх Республикин министрсен кабинечĕн председателĕн заместителĕсем Корейăри Ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн председателĕн заместителĕсем тата Корейăри Ĕçлĕх партийĕпе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительствин ытти руководителĕсем пулнă.

Делегаци членĕсем Ким Ир Сена тата Ким Ду Бона Китай халăхĕ ячĕпе саламлă ялавсем панă.

СТРОИТЕЛЬСТВО МАТЕРИАЛĔСЕМ НУМАЙ ТĂВАÇÇĔ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх влаçĕн çулĕсенче Румынире строительство материалĕсем тăвакан промышленность анлăн сарăлнă. Кăçал, 1949 çулхипе танлаштарсан, строительство материалĕсем туса кăларасси икĕ хут ÿснĕ.

Меджидия хулинче «Чиментул пачи», Молдов хулинче КПСС XIX-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан пысăк цемент завочĕсем ĕçлеме пуçланă. Вĕсенче Румынире туса кăларнă оборудовани вырнаçтарнă. Халĕ цемент туса кăларасси икĕ миллион тоннăна çитнĕ, ку вăл 1938 çулхинчен 4,5 хут нумайрах.

Кирпĕч туса кăларас ĕç те ăнăçлăн сарăлса пырать. 1938 çулхипе танлаштарсан, кирпĕч туса кăларасси виçĕ хут ытла ÿснĕ.

Англири забастовка

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Англири, Шотландири тата Çурçĕр Ирландири машинăсем тата суднăсем тăвакан промышленносри 70 пин рабочи ыхăн ĕнер забастовка тунă Забастовка çур кун хушши пынă Рабочисем ĕç укçи 15 процент ÿстерме требовани лартнă Ку требование предприяти хуçисем сирсе янă пулнă. Халĕ çак требование суднăсем тата машинăсем тăвакан промышленносри рабочисен ячĕпе профсоюзсен конференцийĕ каллех тепĕр хут кăларса тăратнă.

Белфастри машинăсем тата суднăсем тăвакан промышленность предприятийĕсем чарăнса ларнипа пĕрех. Белфастри 40 пин рабочи çак требование ырласа ирттернĕ демонстрацие хутшăннă.

Лондонра суднăсем юсакан заводри 8 пин рабочи ĕçлеме пăрахнă. Вĕсем митингсем ирттернĕ. Митингра ултă тĕрлĕ профсоюзсен представителĕсем тухса каланă.

Учительсен кунĕ

БУСЛАВКА. Районта учительсен кунне ирттересси йăлана кĕнĕ. Иртнĕ вырсарникун учительсем БПСС Центральнăй комитечĕн сентябрьти Пленумĕн итогĕсем çинчен тата ялти учительсен задачисем çинчен доклад итлерĕç.

Учительсен кунĕнче пулнисем çавăн пекех Буславккари пĕрремĕш вăтам шкулта ĕçлекен И Лившиц юлташ «Комсомолпа пионер организацийĕсен вĕрентÿпе воспитани ĕçне лайăхлатас ĕçри задачисем çинчен» тунă доклада итлесе сÿтсе яврĕç.

(Хамăр корр.).

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Кăмака тумалли тата кăмака хутмалли ПРАВИЛĂСЕМ

1. Çĕнĕ кăмака тунă чухне тĕтĕм тухмалли вырăн тата çуртăн йывăçран тунă пайĕсем хушшине 25 сантиметртан кая мар хăвармалла, унта кирпĕч тултармалла тата икĕ сий кĕççе хумалла, кĕççине тăмлă шывра шÿтермелле. Тĕтĕм тухмалли трубана çурт çийĕнчен 50 сантиметртан кая мар çÿлĕрех тумалла. Кăмака трубин тул енĕ тата стропилсен йывăç пайĕсем хушшине 10 сантиметртан кая мар хăвармалла.

2. Кăмакапа йывăç перегородка хушшине 13 сантиметртан кая мар хăвармалла, унта кирпĕч тултармалла тата икĕ сий кĕççе хумалла, кĕççине тăмлă шывра шÿтермелле. Кăмака çумĕнче вут хыпса илме пултаракан стена пулсан, ăна изоляци тăвас пулать,—изоляцине кăмака алăкĕн аялти пайĕ таран тата çÿлелле 25 сантиметртан кая мар тумалла. Урай хăмисемпе мачча хăмисене сарнă чухне çакна астумалла: стенасем, çивиттн, кăмакасем тата трубасем кашни уйрăммăн пусăрăнма пултарччăр.

3. Урай хăми çине кăвар ÿкнипе пушар тухни ан пултăр тесе, голландски, утермарковски е çавăн йышши кăмака ани умне 50 × 70 сантиметр пысăкăш тимĕр листи çапса хумалла. Çав тимĕр листи кăмака ани умĕнчи урайне тата стенана витсе тăтăр. Кăмака анипе ун умĕнчи стена хушшинчи вырăн 1.25 метртан кая мар пулмалла. Кăмака анипе тата поллувалăна хупса тăратма юсавлă алăксем пулччăр.

4. Кăмакасемпе трубасене, уйрăмах кашни куллен хутнă вăхăтра, сĕрмех асăрхаса тăмалла. Ĕçта та пулин пĕсăлни палăрсан çийĕнчех тÿрлетмелле.

5. Кăмакасемпе тĕтĕм тухмалли трубасен хушăк-çурăк ан пултăр. Хушăк-çурăксем пуррине часах асăрхамалла пултăр тесе. трубасен чăрлакра кайне тăм сĕрмелле тата шуратмалла. Кашни куллен вут хутнă вăхăтра кăмака трубисене икĕ уйăхра пĕр хутран кая мар хăрăмран тасатса тăмалла.

6. Кăмака тума тата кăмакасене юсама ку ĕçе тума ирĕк паракан удостоверени пур çынсене çеç чĕнмелле.—ун пек удостоверенисене Шалти ĕçсен министерствин пушартан сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен органĕсем параççĕ.

7. Вутă çуннă чухне кăмака алăкне хупă тытмалла, поллувалăсене çеç уçмалла. Хутнă чухне кăмакасене ÿснĕ çынсен асăрхаса тăмалла Вутă пулениксем тăршшĕпех кăмакана вырнаçчăр çапла тунив кăвар ÿкнипе е вĕри çапнипе пушар тухасран сыхланма май парать.

8. Кĕлпе кăмрăка лайăх хупăнакан тата уралла тимĕр савăт-сапана кăларас пулать. Кăвар кăлармалли савăт-сапа урисем 20 сантиметртан кая мар пулмалла Урай хăми çине кăвар тултарнă чугун лартма юрамасть. ун пек тусассăн урай хăми тивсе кайма пултарать.

9. Кăмакана ытлашши вут хутса хĕртсе яма юрамасть. Кăмакана ытлашши хутсан, вăл çурăлса пĕтме, вара пушар тухма пултарать. Санталлăк сивĕ тăнă вăхăтра кăмакана кун каçиччен темиçе хут, вăхăтлă хутни лайăхрах пулать.

10. Кил хуçисем ĕçта та пулин каймалла пулсан, тухса кайс умĕн кăмакана, кăмака алăкĕсене тĕплĕн пăхса тухса лайăх хупса хăвармалла.

ÇАКСЕНЕ ТУМА ЮРАМАСТЬ:

1. Кăмакара вут чĕртнĕ чухне бензин, краççын, е ытти сасартăк вут хыпса илекен шĕвексемпе сапмалла мар.

2. Кăмака е тĕтĕм тухмалли труба çумĕнче çунакан япаласем (вутă, хут, улăм, кĕпе-йĕм тата ытти япаласем) усрамалла мар Кăмакасемпе тĕтĕм тухмалли трубасем çумне шкафсем сĕтелсем, кроватьсем тата ытти те лартма юрамасть.

3. Пушартан сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен органсем ирĕк памасăр вăхăтлăх кăмакасем лартма тата çав кăмакасене вырăнтан вырăна куçарма юрамасть.

4. Чардакра тăрăхла труба тума тата труба тасатмалли шăтăксем хăварма юрамасть Вентиляци каналĕ витĕр тĕтĕм тухмалла тума юрамасть.

5. Кăмрăкпа кĕле йывăç ещĕксемпе пичкесене кăларма тата çуртсем çывăхне кăларса тăкма юрамасть.

6. Çунакан кăмака патĕнче ялан ах çын пултăр.

7. Çунакан кăмакасене пĕхма ачасене шанмалла мар.

8. Кăмака хутнă чухне кăмака çинче тата кăмака патĕнче кĕпе-йĕм типĕтме юрамасть

Гражданссем! Кăмака тунă тата кăмака хутнă чухне пушар тухассинчен сыхланăр.

Çунакан кăмака патĕнче ачасене пĕччен ан хăварăр, вĕсем, айван пирки. пушар кăларма пултараççĕ: пушар тухнипе ачасем хăйсем сиен курни тата килти пурлăх çунса кайни пулма пултарать.

Кăмакасемпе тĕтĕм тухмалли трубасем яланах юсавлă пулччăр тесе сăнаса тăрăр. Хĕле кĕрес умĕн кăмакасене уйрăмах тĕплĕн тĕрĕслесе пăхăр. Социализмла пурлăха тата килти пурлăха пушартан сыхлăр.

ЧĂВАШ АССР ШАЛТИ ĔÇСЕН МИНИСТЕРСТВИН ПУШАРТАН СЫХЛАНАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН ПАЙĔ.

Шупашкарта пичетлесе тухакан çак хаçатсемпе журналсене 1954 çулта илсе тăма пур граждансем те çырăнса илме пултараççĕ:
«КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ», «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ», «МОЛОДОЙ КОММУНИСТ», «ÇАМРАК КОММУНИСТ», «АГИТАТОР БЛОКНОЧĔ» (вырăсла тата чăвашла), «ЯЛАВ» журнал, «ТАВАН АТАЛ» альманах.
Уйрăм çынсем «Союзпичет» уйрăмĕсенче тата почтăсенче çырăнса илме пултараççĕ. Письмоносецсем граждансен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем фабрикăсемпе заводсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышăнаççĕ.
Предприятисен, организацисен, шкулсен, культпросвет учрежденисен, колхозсемпе МТС-сен службăра усă курма тата пĕрле вуламалли вырăнсенче усă курма хаçатсемпе журналсем «Союзпичетĕн» районсемпе хуласенчи уйрăмĕсенче çырăнса илмелле.

ТЕАТР
ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРЕНЧЕ—октябрĕн 31-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Виçĕ туй»
Ноябрĕн 1-мĕшĕнче кăнтăрла та каçхине те вырăсла спектакль «Вей, ветерок».
Кăнтăрлахи спектакльсем 12 сехетре, каçхине—19 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ
ÇАМРАКСЕН ТЕАТРЕНЧЕ — октябрĕн 31-мĕшĕнче «Забавный случай» (виçĕ пайлă комеди).
Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО
«УДАРНИК»—октябрĕн 31-мĕшĕнче тата ноябрĕн 1-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Корабли штурмуют бастионы» («Адмирал Ушаков», 2-мĕш сери).
Сеанссем пуçланаççĕ 14 сехет те 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м. тата 20 с. 15 м.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн промышленноспа строительствăра ĕçлеме рабочисем пухакан пайĕ «Вологдалес» комбинатăн тата «Чувашлес» трестăн предприятийĕсенче сезонта ĕçлеме рабочисем пухать.
«Вологдалес» комбинат предприятийĕсенче ĕçлеме договор тунă рабочие каялла таврăнмалла мар вăхăтлăх пулăшу 200 тенкĕ, «Чувашлес» трест предприятийĕсенче ĕçлеме договор тунă рабочие çавăн пек пулăшу 100 тенкĕ параççĕ; ĕçлеме кайнă чухне çул çинче пулнă вăхăтра талăкне 10 тенкĕ тÿлеççĕ.
Ĕç вырăнне кайнă чухне тата договор срокĕ тухсан каялла килнĕ чухне çул укçи тÿлеттермеççĕ. Предприятие çитсен сезонлă рабочие общежитие вырнаçтараççĕ, вырăн сармаллисем параççĕ. Кунсăр пусне, администраци 200—300 тенкĕ аванс пама пултарать, авансне 2 уйăх хушшинче тÿлесе татмалла.
Колхозниксем вăрман хатĕрлевĕ е сулă юхтарнă çĕрте ĕçлесе сезонти нормăна тултарнă пулсан, вĕсен хуçалăхĕсем сĕт тата аш-какай памалли нормăна 25 процент чакараççĕ.
Вăрман хатĕрлемелли сезонта ĕçлеме договор тăвас ыйтупа райсовет исполкомĕсенчи оргнабор уполномоченнăйĕсем патне пымалла.
ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔН ОРГНАБОР ПАЙĔ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—6-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—3-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-09, облорсен пайĕ—5-84, пропаганда пайĕ—3-21, ялхуçалăх пайĕ—3-07, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ 3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—9-23.
НТ 09019
Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2400 Тираж 20,000 экз.